К С(Чув)
С47
34254-чув

Юрий Скворцов

УКĂХ ХУРĂНĔ

СУРĂМ ХĔРĔ

Повесть

1

Çак таврари ял ячĕсене кунтан пĕр вунă-вун пилĕк çухрăм аякра В.— касси, Й.— касси тесе асăнсан — нумайăшĕ пĕлмест те. «В.— касси Сурăм, Й.— касси Сурăм...» тесен вара — кунтан хĕрĕх-аллă çухрăм йĕри-тавраллисем те «А-а, пĕлетĕп» тесе пуçĕсене сĕлтеççĕ. Мĕншĕн тесен ку ялсем Сурăм шывĕ тăрăх ларса тухнă.

Шывĕ пĕчĕкскер çеç вăл. Вăйлă çăл куçлă сулхăн вар хушшинчен тухакан юпсем Сурăм шывĕн таппи пулса тăраççĕ. Ялĕсем кунта нумайăшĕ çавăн пек вар пуçĕсене вырнаçнă.

Сурăмпуç ялĕ те пĕр пысăк вар пуçĕнче ларать. Сурăм шывĕ çак ял патне çитнĕ çĕре шыв арманĕн çуначĕсене çавăрмалăхах вăй илет. Сурăмпуç ялĕнчен тепĕр çухрăм анатарахри ял ГЭСĕ — Сурăм таппинчи пĕрремĕш ГЭС.

Çак таврари ялсенчен Сурăмпуçĕ уйрăмах илемлĕ. Ялĕнче çирĕм ултă кил çеç пулин те, таврари хĕрсем Сурăмпуçне тесен ĕлĕкренех хапăл тусах качча пынă теççĕ.

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçиччен çак ял варринчи çырма икĕ енĕпе улма пахчисем тăсалнă. Улăхсенче тăршшĕпех çирĕклĕх ӳснĕ. Халĕ улма пахчисемпе çирĕклĕх çук пулин те Сурăмпуçĕ хăйĕн илемлĕхне çухатман.

Çурçĕр-хĕвел анăç еннелле пăхакан хăрах енлĕ урамăн пахчисенех кĕрсе тăракан пĕчĕк хутăш вăрман пур, ун варринче икĕ-виçĕ тĕлте — пĕчĕк пĕвесем. Çак пĕчĕк вăрман хыçĕнчех, тепĕр ярăм уй урлă,— Қуканар вăрманĕ. Тепĕр пысăк вăрманĕ вара ялăн мал енĕпе çурçĕр еннелле кайса çухалать.

Ялтан çав вăрмансен тăррисем сулланни те курăнать, кайăксем юрлани те лайăх илтĕнет.

Қăнтăр-хĕвел тухăçнелле пăхакан тепĕр хăрах енлĕ

урамри пахчасен хыҫӗнче Ҫаҫликка варӗпе касӑлнӑ сӗвеклӗх Сурӑм улӑхне ҫитиех тӑсӑлать.

Сурӑм ку тӗлтен кӑнтӑралла юхать.

Ҫак Сурӑмпуҫ ялӗнче ҫыннисем те хӑйне евӗрлӗ теҫҫӗ. «Илемлӗ вырӑн» тесе качча килекенсем чылаях пулнӑраншӗ — кунта ҫут ҫанталӑка юратса унпа киленме пӗлекенсем, тарӑн туйӑм-сисӗмлӗ, ырӑ та ҫемҫе чунлӑ ҫынсем, хитре хӗрсем чылай теҫҫӗ.

Тӗрӗсех-и ку, ҫук-и?.. Анчах пӗчӗк Сурӑмпуҫ ялӗ ҫулсеренех ку таврари хӑйӗнчен улт-ҫич хут пысӑк ялсенчен те ытларах хӗр парать. Епле хӗр ӳстерсе ҫитерет ҫеҫ!.. Ҫак ял яш-кӗрӗмӗ те ялта ҫичӗ туратран иртмен хурӑнташлӑ хӗрсемсӗр пуҫне урӑх тупӑнмасан ҫеҫ ют ялтан хӗр илетмӗн.

Чӑнах та ӗнтӗ, кунта пӗтӗм ял пӗр-пӗринпе тӑванлӑхурӑнташлӑ. Ялта пӗр кил ӗҫкӗ тусан — пӗтӗм ял унта пухӑнать.

Ҫамрӑксем ҫулсеренех пухха каяҫҫӗ.

Кунта пухӑсем Йӳҫкассинче, Уйчӳккассинче, Шурчара, Ишекре, Чӑваш Сурӑмӗнче пулаҫҫӗ. Ҫав пухӑсем ӗлӗкренех пыраҫҫӗ, вӗсем ӗлӗк чиркӳ хӗресне «светить» тунӑ кунпа ҫыхӑннӑ-мӗн. Асӑннӑ ялсенче ӗлӗк кашнинчех чиркӳ пулнӑ. Халӗ чиркӳсем ҫук пулин те, пухӑсем пурпӗрех ҫулсеренех тата кашни ҫулах пӗр вӑхӑтра пулаҫҫӗ. Анчах нумайӑшӗ халь ҫав пухӑсем мӗнрен пуҫланса кайнине пӗлмеҫҫӗ те, пӗлесшӗн те мар.

Пухӑ та пухӑ — ҫамрӑксемшӗн уяв!

Ҫак таврашра туй йӑли-йӗрки те ӗлӗкхиех сыхланса юлнӑ. Халӑх ӑна, чӑнах та, нумай ҫӗнетнӗ ӗнтӗ. Чиркӳпе «асамлӑ вӑйсене» ӗненнипе ҫыхӑнни йӑлтах тухса ӳкнӗ вӗсенчен.

Ҫак таврари яш-кӗрӗм ялан тенӗ пекех Чӑваш Сурӑм пуххи тӗлӗнче авланать. Пуххи вӑл яланах утӑ ҫинче, июлӗн 12-мӗшӗнче пулать. Кун умӗнхи пухӑсенче каччӑ «хӗр пӑхать». Сурӑм пуххинче вара — «хӗр вӑрлать». Халь ку «хӗр вӑрлани» тӗлӗнмеллерех пулин те — кунта чӑнах та халӗ те ҫапла.

Паллах, пӗлмен-курман-калаҫман хӗре «вӑрламаҫҫӗ» ӗнтӗ: хӗрпе килӗшсе-калаҫсах татӑлаҫҫӗ. Хӑйне «вӑрласса» та вӑл пӗлет. «Вӑрланипе» хӑй те килӗшет. Мӗншӗн тесен «хӗр вӑрласан» каччӑ туй йӑли-йӗркине пысӑк тӑкаксӑрах — пӗчӗк ӗҫкӗпех (хӗр ҫураҫса, хӑтана кайса, таврӑна хӑта халӑхӗ кӗртсе) ирттерсе ярать. Пысӑк туй тӑвас текенсем хӗре «вӑрламаҫҫӗ», евчӗсем ярса ашшӗамӑшӗпе килӗшсех тӑваҫҫӗ.

Пĕлтĕрхи Сурăм пуххинче Сурăмпуçĕн пурлă-çуклă хĕрĕсенчен иккĕшне вăрланă. Апла пулин те Сурăмпуçĕнчен кăçалхи Сурăм пуххинче те кама та пулин вăрласса, пурпĕрех туй пуласса шансах тăраççĕ.

Сурăм пуххиччен эрне ытла пулин те — пĕтĕм ялĕ ĕнтĕ яланхи пекех сăра тума хатĕрленет. Ҫилĕренех така пусасси çинчен калаçаççĕ, килтен киле хăмла, çĕпре, кăвас тĕпĕ, энĕç вăрри ыйтса чупаççĕ. Хунькассисене хăнана чĕнме каяççĕ, хăшĕсем тата «туй курма» та теççĕ. «Ҫам кама илет?» тесен пурте кăнтăралла пăхакан урам варринчи хĕвеле тӳртĕн шатрун çурт еннелле пăхса куçĕсене хĕссе илеççĕ.

Ку çуртра Пăрасук инке хăйĕн виçĕм çул авланнă ывăлĕпе тата Сухви ятлă хĕрĕпе пурăнать.

Сухви çинçе пилĕклĕ, теветкел сăн-питлĕ, вăтам пӳллĕ хӳхĕм хĕр. Сăн-пичĕпе вăл хĕвел тухăç халăхĕсен хӳхĕм хĕрне асилтерет. Ҫӳçĕ те, хулăн куç харшисем те, пăт хура куçĕ те, кăшт тĕксĕмрех сăнĕ те — ăна калама çук хăйне евĕр илем кӳреççĕ.

Амăшĕ унăн, Пăрасук, çак ялти вăтă хусаха — каччине хăйне юратса мар — çак тавралăха юратса килнĕ теççĕ. Пăрасук пит хуйхă тытакан хĕр пулнă. Аякран çаврăнса тивнĕ сăмаха та вăл йывăра илнĕ. Анчах ун пĕр çитменлĕх пур имĕш: тĕшмĕшрех çын-мĕн.

Сухвие ялта амăшĕ пекех туйăмлă хĕр теççĕ. Ҫăçал вăл вун саккăра пуснă.

«Питĕ юсу хĕр вара» теççĕ ун пирки ялта. Сĕт пек шурă куç шурри çинче пиççех çитмен çĕмĕрт тĕслĕ хăмăр куç шăрçи, ун ăшĕнче тепĕр хуп-хура пĕчĕк пухра пек пăнчă ларать. Тутине вăл чăпăрт тытса çӳрет. Сăмси пĕчĕк те тӳрĕ, пичĕ пиçнĕ пĕрлĕхен тĕслĕ, тути тăсăк йĕкĕр чие пек.

Ҫăçалхи Сурăм пуххи тĕлĕнче çак хĕре вăрласса кĕтсе ĕçкĕ ĕçме шак хунă ĕнтĕ ял-йыш.

Анчах кам вăрлать-ха ăна?

Кун пирки никам та пат татса калаймаи.

Сухвие амăшĕ питĕ çирĕп тытнă. Ку таранччен никам та Сухви каччăпа тăрса сăмах хушнине те, вăйă картинчен тăрса юлнине те курман. Анчах кăçалхи пухăсенче ăна нумай каччă куç хывнă имĕш.

«Ҫам илсе, кам ыр курĕ-ши?», «Ҫама кайса савăнтарĕ-ши?» текенсем те пулнă.

Хăшĕ-пĕри: «Ҫăçал Сухви качча каймасть, вăл питĕ каччă тиркет»,— тенĕ; теприсем: «Чун патĕнчи пур: Хĕветли инкен ывăлне кĕтсе пурăнать»,— тенĕ. Виççĕмĕшсем:

«Хĕветли инкен ывăлĕ, вун виçĕ-вун тăватă çул таран вĕреннĕ те, ялта икĕ çул пулман та — çав сурăх кĕтĕвĕ пăхакан çичĕ çул çеç вĕреннĕ ял хĕрĕшĕн питех хыпать пулĕ...»— тенĕ.

Ҫу сăмахсем Хĕветли инкен хăлхине те кĕнĕ. «Çынпа çын пĕрех пуль,— тенĕ вăл юриех сăмаха çемçетсе.— Халĕ сахал-и нумай вĕреннĕ çынпа ахаль çын мăшăрланни...»

Хĕветли инке ял-йышпа пĕлĕш-хурăнташлă пулас пирки сахал мар шухăшланă. Пĕтĕм ял ĕçкĕ-çикĕре чух вăл кăна вĕсемпе хутшăнайман: никампа та тăван-пĕтенлĕ мар... Сухвие кин тăвас пулсан — Хĕветли инке те халăха еретчĕ, пĕтĕм ялпа хурăнташ-пĕлĕшлĕ пулатчĕ. Вĕсемпе уявра-мĕнре савăнатчĕ.

Сухви Хĕветли инкене питĕ килĕшнĕ. «Эх, çав Сухви ман кин пулас пулсан...» тесе пĕрре çеç мар сăмах вăлтса илнĕ Хĕветли инке хăй ăссĕн те, çын умĕнче те, Сухви амăшĕ умĕнче те. Пăрасук инке ним те калайман. «Тем, пĕрне-пĕри вĕсем тĕс мар пуль,— тенĕ вăл.— Унăн, хулара пурăнаканскерĕн, унтах темĕн чухлĕ пулĕ — майран çакăнакансемех...»

Хĕветли инке юлашки вăхăтра час-часах Сухви пирки шухăша кайнă.

«Сăмаха пуç тавра шухăшламасăр пат персе ямасть, çиччĕ виççе калаçать; ватăпа — ватă пек, яшăпа — яшă пек. Çын ачисем пек вĕçкĕн мар, шулака мар. Кăмăллă, сăпайлă, хитре... Тăван-пĕтенĕсем хушшинче те апла-капла çын пулман, нихăшне те усалпа, ырă маррипе асăнмаççĕ...»

Мĕн кирлĕ тата?..

Ун начар-им ывăл?..

Юратнă ывăл кун-çулне мĕншĕн таçти çĕрти-шыври пĕлмен-курман çын шăпипе çыхас-ха? Шет, темле хĕр çакланать-ха, ача-пăча — ватти ăс памасан — «ватти çук та, латти çук» тенĕ пек — мĕн пĕлет?.. Аслă ывăлĕсем ав хулара авланчĕç те — килсе те курмаççĕ, пĕрле ĕçсе-çиесси çинчен çăвара та ан ил. Кĕçĕннине те пулин — Санькăна — ялтах мăшăр тупса парасчĕ. Хĕветли инке мĕн чухлĕ хут çырмарĕ пуль ĕнтĕ ывăлĕ патне яла килсе курма чĕнсе. «Вăхăт çук» та «вăхăт çук» тесе хуравлать ывăлĕ.

Пĕр икĕ кунлăха та вăхăт тупма çук-ши вара тăван амăшне килсе курма? Хăй тимлемест пулĕ çав. Тăван яла манса кайрĕ пуль.

2

Чăваш Сурăм пуххиччен шăп та шай пĕр эрне юлчĕ.

Кунсем хĕвеллĕ те шăрăх тăраççĕ. Çемçерех йывăç çулçисем: çăка, шĕшкĕ, çул хĕрринчи хурама çулçисем — кăнтăрла тĕлнелле шăрăхпа ĕнтĕркесе шансах каяççĕ те ерипен сулланкаласа тăраççĕ, йывăçĕ те сĕнксе çеç ларать. Ир еннелле çеç каçхи сулхăнпа, нӳрĕ сывлăшпа вăй илсе чĕрĕлеççĕ.

Паян кăнтăрлапа Сурăмпуç еннелле чăматан йатнă пĕр яш ача утса килни курăнчĕ. Вăл кӳршĕ ялтан тухсанах хăйсен улăхне пăрăнса кĕчĕ те çыр хĕррипе утрĕ.

Вăл, ахăртнех, кунта час-час пулмасть-тĕр, анчах çак тавралăх унăн тăван кĕтесĕ пулни, çак яш ачана вăл чунтанах килентерни сисĕнсех тăрать. Каччă пуçне енчен енне пăркаласа пĕрре сулахай енчи сийлĕн-сийлĕн тăсăлакан вăрман тăрри çине, тепре ун çумĕнчи пиçе пуçланă вăрăм ыраш уйĕ çине, сылтăмра улăхваррипе хуçкаланса тăсăлакан Сурăм çине пăха-пăха илет.

Улăхра пĕр ушкăн хур сапаланнă, тепĕр ушкăнĕ умлăн-хыçлăн тем тăршшĕ тăсăлса çыраналла хăпарать.

Каччă улăх лапине çерем ватса акнă кантăр ани хĕррипе иртрĕ. Сăмсана техĕмлĕн кăтăкласа симĕс кантăр тусанĕн шăрши çапрĕ. Кантăрĕ кунта çын пĕвĕнчен те çӳллĕ ӳснĕ: пуçĕсем тукмак пек çĕкленсе аран-аран çеç сулмаклăн сулланкалаççĕ. Вĕсем хушшинче тин çеç уйрăла пуçланă пусасем кăштăртаткалаççĕ.

Каччă кĕлеткерен вăтам та яштак, пӳ-сирен килĕшӳллĕ. Вăл кĕске хуллă пурçăн кĕпепе, шурă шăлаварпа тата шăтăклă-шăтăклă питлĕ шурă пушмакпа. Хăрах хулĕнчен кăвак плащ хуçлатса уртнă.

Ку — Хĕветли инкен кĕçĕн ывăлĕ Санька...

Акă ĕнтĕ çулталăк çурă çитрĕ вăл çуралнă ялта пулманни. Инçетрен килсен улшăну тӳрех сисĕнет çав. Авă кунта улăхра — Сурăмпуçпе Панкли хушшинче — пысăк пĕве тунă. Ялĕсен хушши те кĕскелнĕ пек. Вĕсем пĕрпĕрин патнелле çывхарнă пек. Ку вăл икĕ ял пуçне те çĕнĕ çуртсем хутшăннипе ĕнтĕ. Улăх лапине те сухаламанччĕ. Кунта пĕчĕк чух кăшкар ути пуçтарма пĕрре мар килнĕ Санька...

Пĕлтĕрех сухаланă-ши ăна?

Пĕлтĕр çулла яла килме май килмерĕ ун. Музыка училищинчен вĕренсе тухсан ăна пĕр колхоза пултарулăх кружокне ертсе пыма ячĕç. Малтанах унта юрă праçникне хатĕрленмелле пулчĕ, кайран тĕрлĕ вак-тĕвек ĕçсем...

Халĕ ав Шупашкара Халăх пултарулăх çуртне куçарчĕç...

Яла çапах та чун туртать. Ķирек ăçта кайсан та, кирек мĕнле çынсемпе пулсан та — тăван ялах, тăван ял çыннисемех аса килеççĕ. Ķирек мĕнле хулара пулсан та Санька пурпĕрех — ял ачи. Ял чунĕ, ял кăмăлĕ ун.

Санька чăнкă çырантан хăпарса урисене çут хĕрринчен усса ларчĕ. Çумри пăри тунисем кушак сухалĕ пек вăрăм хăлчăкĕсене хускаткаласа пуçĕсене пăркалаççĕ.

Аякра Сурăм хĕрринчех сурăх кĕтĕвĕ çӳрет. Унта пĕр хĕр кĕлетки куçкалани курăнать.

Санька тек-текех сурăх кĕтĕвĕ еннелле пăха-пăха илчĕ. Ķам кĕтет-ши халь çав сурăх кĕтĕвне? Ķунтан кĕтӳçĕн тумне те уйăрса илме çук.

Тепĕр самантран сурăх кĕтĕвĕ енчен юрлани илтĕнчĕ:

Çĕн калуша хĕрхенсе
Вĕттĕн пусма вĕрентĕм.
Çын куласран именсе
Пуçа чикме вĕрентĕм.

Сухвиех мар-ши?

Сухвие аса илсен çак тавралăх татах та илемленсе каять... Ķунта темĕнле питĕ илемлĕ, тарăн шухăшлă, кăшт хурлăрах кĕвĕ илтĕнме тытăнать. Ķашни кĕтесĕн, кашни тавралăхăн хăйĕн кĕвви пур иккен... Ăна сăмахпа калама çук, ăна чун сисĕмĕ çеç туять... Çавна сасăсемпе çеç тытма пулать... Çакна Санька ача чухнех асăрханă, анчах ун чухне вăл ăс-тăна сĕртĕнмесĕрех иртнĕ...

Çак вырăнта ларсан Санькăна мĕн ачаранпах темĕнле хурлă аваллăхăн астаракан мерченлĕхĕ чуна пырса сĕртĕнет... Хăйĕн темĕнле хурлăх йĕррин, хурлăх туйăмĕн уçăмлăхĕпе...

Вара çак вырăнта ĕлĕк питĕ чуна хумхантаракан пĕр-пĕр япала — пĕр-пĕр паттăрла ĕç-и е пысăк юрату-и — пулнă пек, анчах ăна халĕ никам та астуман пек, çав ĕç чăнахах пулнине çакăнта ларнăçем ăшра хускалса илекен туйăм çеç систерсе тăрать пек...

Пысăк юрату пулнă пулсассăн... Хĕрĕ вара çак улăхра сурăх кĕтĕвĕ кĕтекен Сухви пек... Ķу, паллах, йăпанулла шухăш-ĕмĕт юххи... Пĕр-пĕр опера е симфони пуçламăшĕ...

Шăпах çавăн пек япала çырасшăнччĕ ĕнтĕ Саня. Вăл япала çак вырăнта ларнă чух çуралакан туйăмран тухса тăмалла... Хĕр сăнарĕ те çавах пулмалла... Сухвиех...

Сăнĕ-пичĕ унăн кăшт хурлăрах. Анчах кăмăла тытса илекен, чĕрене çемçетсе ярса ирĕксĕрех хăй патнелле тур-

такан хурлăх, туйăмсемпе пуян хурлăх... Чĕрери туйăм-ĕмĕт пуянлăхĕ пурнăçра пур чухне те хăйне килĕшӳлли те тивĕçӳлли тупайманнипе ăванса асапланни ун пит-куçĕнче çапла хурлăн йĕрленнĕ пек туйăнать.

Кун пек сăн-пит, чăнах та, туйăмсемпе пуян çыннăн нумай ĕмĕтленнĕ те сахал тупнă, ырлăха ĕмĕтленнĕ те шырлăха ытларах курнă çыннăн, ку мĕншĕн çапла пулнине ăнлансах пĕтерейменсен, анчах халĕ хăй мĕн тупнипех ĕмĕрлĕх çырлахсан пулать.

Ун çине пăхсан хăвна та хурлă пулса каять. Ăна темшĕн шеллесе хӳтлĕхе илес килет.

Санька куçĕ умĕнче акă темиçе çул хушши ĕнтĕ çавăн пек хĕр тăрать... Ку вăл, паллах, пĕр-пĕр пулас симфони сăнарĕ... Ăс-тăнри, ĕмĕтри сăнар... Санька ăна пурнăçра шырасан — Сухви куç умне тухать...

Сухви сăн-питĕнче чăвашăн тĕлĕнмелле хăйне евĕр çемçелĕхĕ, мĕн пур чунтан юратма та хурланма, кирлĕ пулсан тарăхма та, кирлĕ пулсан — виçесĕр савăнма та кулма никамран ытла пултаракан темĕнле йĕрĕ, питĕ сисĕмлĕ, пысăк, тарăн чун, çĕр çине тепĕр хут нихçан та çуралма пултарайман хăйне евĕр илемлĕх сисĕнет.

Аякран-аякран шутарса каланă сăмаха та вăл хăй çине илсе пăшăрханассăн, унăн сăнĕ тата хурлăрах пулса каяссăн туйăннипе ун умĕнче ахаль сăмах каласа яма та иккĕлентерет, шухăшлаттарать. Вăл хаваслă чух вара — хавасланмасăр, кулмасăр тӳсме те çук.

Виçĕм çул Санька ялти вăйăсене тухса çамрăксене пĕрре мар купăс каласа сиктернĕ, юрлаттарнă, вылят-тарнă.

Унта Сухви те пулкаланă.

Вăл кĕскен çеç кулса илнине сӳтсе-тăсса нотăсемпе çырса хурас пулсан хăех пĕр юрă — таçта кайăк тĕнчине вĕçтерсе каякан хурлăрах юрă кĕвви пулса тăрать. Вăл кĕвĕре вара чăвашăн пĕрчĕн-пĕрчĕн пĕр çĕре пуçтарăнса чăмăртаннă мерченлĕхĕ сиккелет.

Санька чунтан кулакан çынсене курнă пулин те, кулăра çавăн пек илемлĕ сасă ылмашăвĕсен мерченлĕхне ника-мăнне те асăрхаман. Ку вăл хăйне çеç пӳрнĕ пултарулăх пулĕ Сухвин?.. Ăна вăл хăй асăрхамасть те пулĕ. Тен, Санькăна çеç, музыка çыннине, çапла туйăнать? Тен, вăл Санька ĕмĕт-шухăшĕнче çеç çавăн пек ӳссе кайнă? Тен, Сухви хăй (чăн-чăн пурнăçри Сухви) апла мар?

Сухви вăйă картинче юрланине те илткеленĕ Санька. Анчах вăл нихçан та хăйĕн сассине çеç уйăрса илмелле пĕччен юрламан. Юрă пуçламăшĕнче те, юрă вĕçĕнче те

унӑн сасси илтӗнмен: вӑл — хӑй сассинчен ҫын умӗнче вӑтанса — чи кайран юрлама пуҫланӑ та чи малтан чарӑннӑ. Юрӑ варринче хӑйӗн сасси ҫынна илтӗнмест тенӗ пулас вӑл. Ун сасси, чӑнах та, ахаль ҫынна илтӗнсех илтӗнмен. Анчах ахаль ҫынна илтӗнмен сасӑ музыка ҫыннине темӗнле хуллен юрласан та илтӗннине Сухви пӗлмен.

Санька унӑн сассине аванах илтнӗ.

Вӑйӑ карти юрланӑ чух ҫав ушкӑн сассине тутлӑ яшканах тӑвар ҫитеймен пек туйӑнса тӑнӑ пулсан Сухви юрла пуҫласан вара — ҫав ушкӑн сассинех пачах урӑх тутӑ парса — чуна кӑмӑллӑн сӑркӑлтаракан янрав хутшӑннӑ.

Кунсӑр пуҫне Санька Сухвие улӑхра час-часах курнӑ. Санька вӑлтасем йӑтса Сурӑм шывӗ хӗррине, Қаҫликка варӗ тӗлӗнчи шыв кукӑрне, пулӑ тытма аннӑ. Йӑпӑлтакпа кутан ҫеҫ кӗнӗ пулин те унта ларма кӑмӑллӑ пулнӑ.

...Вӑлта хулккине шурӑ кӑпӑк карталаса илет, ҫыран леш енне ларса лиҫ кайӑк юрлать. Хыҫра сурӑхсем мӑштӑртаткаласа ҫыран хӑйӑрне юхтараҫҫӗ. Хушӑран хушӑ вӗсене пӑхакан кӗтӳҫӗн сасси те — Сухви сасси илтӗнкелет. Сухви хӑй пӗрре те ҫыран хӗррине пымасть. Вӑл темшӗн Санькӑна курсанах аяккалла тарать. Ача ӗнтӗ! Мӗнех калӑн? Кӗтӗвне вара вӗсем (Сухви тепӗр карчӑкпа пӗрле кӗтнӗ) темшӗн Санька пулӑ тытма тухсанах ун ҫывӑхнелле хӑваланӑ...

«Қаҫликка варӗ тӗлнерех хӑпарас...» тесе Сухви кӑшкӑрнине Санька аякранах илтетчӗ. Унӑн карчӑк-юлташӗ «Унта курӑкӗ ҫук-иҫ» текелесе ӳпкелешетчӗ пулин те кӗтӳ пурпӗрех Санька авӑрӗ патнех пыратчӗ...

Санька амӑшӗ Сухви пирки пӗрре ҫеҫ мар шӳт тукаласа илетчӗ.

«Қачча илсе парас мар-и сана ҫавна? Питӗ юсу вӗт»,— тетчӗ вӑл хӑш чухне Сухви пӗве пуҫӗпе ҫӑл патнелле утнине курсан.

Хӑйӗн ҫырӑвӗсенче те вӑл ним йӳн-йӳтӗмсӗрех Сухви пирки асӑнса илет. «Ӳсрӗ, хӗр пулчӗ, хитреленсе кайрӗ»,— тесе ҫырчӗ вӑл хӗлле пӗррехинче.

«Ӗҫ вӑл ӗмӗрне те пӗтмест: эс вилсен сан вырӑнна тепӗр ҫын лармалӑх та, вӑл вилсен урӑххине ӗмӗр тӑршшӗпе ӗҫлеме те ҫитет. Пурпӗрех пӗтмест. Қилсе кур-ха пӗрре пӗр-ик кунлӑха та пулин. Сухвие кӑҫал Сурӑм пуххи тӗлӗнче вӑрласа та каяҫҫӗ пулӗ». Ҫапла ҫырнӑччӗ амӑшӗ юлашки эрнери ҫырӑвӗнче.

Сурӑм пуххиччен шӑп пӗр эрне юлчӗ.

Акă ĕнтĕ Санька халĕ тăван улăхра ларать. Ҫиле таврăнать. Ҫилтех-ши унăн амăшĕ?

Сухви мĕнле-ши халĕ?

Санька аякра, Сурăм хĕрринче, кăшт ҫеç йăсăрланакан тусан ăшĕнчи сурăх кĕтĕвĕ еннелле пăхрĕ.

Ҫак вăхăтра Сурăм леш енчи ял кĕтĕвĕ патĕнчен виçĕ хутчен умлăн-хыҫлăн пушă шартлатни илтĕнчĕ. Ҫыранăн ку енчи сурăх кĕтĕвĕ патĕнчен те, ăна хурав панă пек, пушă сасси шартлатрĕ. Ҫыран леш енчи кĕтÿç — те ача, те яш ҫын, те ватă ҫын — ывăç тупанне куç харши тĕлне тытса Санька ҫинелле тинкерчĕ.

Кĕтмен пушă сасси Санькăн пур илĕм-тилĕм шухăшĕсене салатса ячĕ.

Санька темшĕн-çке шартах сиксе илчĕ те ура ҫине тăчĕ, вара чăматанне йăтса хуллен ял еннелле утрĕ.

3

Санька киле анкарти витĕр никама систермесĕрех пырса кĕчĕ.

Амăшĕ кил хушшинче тĕк тататчĕ. Вăл сайхалăх алăкĕ уçăлнине те илтмерĕ. Яри уçăлнă алăкран ҫил вăркăнса кĕрсе таканари тĕке вĕçтерсе çĕклесен тин аллисемпе хăлаçланса илчĕ те сайхалăх еннелле пăха пачĕ...

— Уй!.. Санька тем...— терĕ вăл тÿрех ывăлне хирĕç утса.— Мĕнле килме пĕлтĕнех, ачам...

Санька хăй астăвасса малтанхи хут амăшне ыталаса чуп турĕ. Амăшĕ ватăлсах кайнă. Вăл ĕнтĕ килте çеç кăштăртаткаласа ҫÿрет.

Йăмăкĕ килте ҫук, вăл улăха утă пуçтарма кайнă.

Амăшĕ Санькăна çăмарта ăшаличчен тесе пысăк хурантан икĕ хут ăшăтнипе чĕмленсе-тĕнсех ларнă çĕр улмиллĕ шÿрпе антарса пачĕ. Ҫĕпре тăррине сăрăхтарса пĕр курка сĕвĕрĕлсе кайнă, шăркаланнă сăра тултарчĕ. Сăринчен пыра тăкăскă ларчĕ.

Санька сĕтел ҫине тĕтĕмпе вĕтеленĕ ылтăн тĕслĕ пулă ҫыххи кăларса хурсан амăшĕ хăйĕн чи юратнă ҫимĕçне курса хĕпĕртесех кайрĕ.

— Ай-у-уй, ывăлăм... Епле илме пĕлтĕнех,— терĕ вăл савăннипе хурланса.

Санька чунĕ те ҫемҫелчĕ. Нумай та кирлĕ мар-çке амăшне савăнма. Ҫав ним мар япалах ăна савăнтарса хурлантарчĕ. «Эх, анне кăмăлĕ! Анчах ăна хуçма та нумай кирлĕ мар. Епле-ха хуçăн ăна?..»

* * *

Ҫаҫ еннелле сулхăн ансан Санька улăхсем тăрăх курса ҫаврăнчĕ. Вăл яла кĕнĕ чухне килĕренех картлам кĕвентеллĕ хĕрсем, хĕрарăмсем купăста-хăяр шăварма пĕве хĕррине шыва аннине курчĕ. Килĕренех тутлă яшка шăршипе хутăшнă шĕвĕ тĕтĕм йăсăрланать. Ҫаҫхи апат туса хăй ҫутнă хыҫҫăн амăшĕ Санькăна хуллен ҫапла каларĕ:

— Урамалла тухса курмастăн-и? Вăйă вăхăчĕ халь... Сухви те тухать пулĕ...

Ывăлĕ мĕн те пулин каласса кĕтсе Хĕветли инке пĕр вăхăт чĕнмесĕр ĕҫлерĕ. Кăвас ҫăрса пĕтерчĕ те сылтăм ал тунине, пӳрне хушшисене ҫĕҫĕ тӳрчĕпе хырса чустаран тасатрĕ. Кăвас чĕрес анине хĕрлĕ кĕрмепе ҫыхрĕ.

— Сана качча илсе парас мар-и ăна?—терĕ вăл малалла, кăвас чĕресне кăмака ҫине кайса лартнă май.— Мĕнле хитре вăл. Алли-ури ҫавăрса тунă пек... Ĕҫчен... Ҫавна ту тессе кĕтсе тăмасть... Халиччен ҫынна пĕр урлă сăмах, пĕр сив сăмах каласа курман пулĕ... Вĕреннĕ ҫынна кайрăм тесе хăй те юратса, хисеплесе пурăнĕ...

Хĕветли инке самантран каллех сăмахне малалла тăсрĕ:

— Сана ыр тума ман ҫитет... Сăра тăватăп... Така пусатăп...

Саня нимĕн те чĕнмерĕ. Пӳртрен тухрĕ те амăшĕ ун валли чăлана сарса хунă вырăнĕ ҫине ҫывăрма кĕрсе выртрĕ.

Йăмăкĕ — Енюк — ун хыҫҫăн ăшшăн кулкаласа пăхса юлчĕ.

Санька чылайччен чăлан маччи ҫинелле пăхса выртрĕ. Хĕҫ тимĕр хушăкĕнчен пĕчĕк ярăм ҫутă кĕрет. Хушăк ун ҫине пăхсан-пăхсан ҫап-ҫавра пулать, вăл пĕрре ҫуталса, тепре тĕксĕмленсе килет — ун тĕлĕпе йывăҫ тăрри сулланать иккен, йывăҫ тăрри хушăран хушă хĕҫ тимĕре перĕнсе чăнкăртаттарать.

Ҫунĕпе утнипе ура тупанĕсем ҫурăлас пек тĕлкĕшсе пĕҫереҫҫĕ, тапхăр-тапхăр ҫеҫ лăш пулать.

Амăшĕн сăмахĕсем Санькăна вăтантараҫҫĕ пулин те вăл Сухви ҫинчен калаҫа пуҫласанах чĕрере тем ăшăскер ирĕлсе сарăлать. Ҫуҫ умне сар хĕвел пăхнипех куҫăхакан чечек пек ачаш хĕр сăн-пуҫĕ, кĕлетки тухса тăрать. Вăл халĕ те куҫ умĕнчен кая пĕлмест.

Саня минтере ҫатăрласа тытса куҫне хупса выртрĕ. Чылайччен выртрĕ вăл ҫапла. Куҫ умне татах та уҫҫăн-

рах тухса тӑчӗ кӑвакарчӑн пӗсехи пек тӑпӑл-тӑпӑл кӑкӑрлӑ, йӗкӗр ывӑҫа кӗмелле пилӗклӗ хӗр кӗлетки. Вӑл халь нихҫанхинчен те чиперленсе, ӗлккенленсе кайнӑ иккен. Ҫакна Саня паҫӑр улӑха кайнӑ чухне асӑрхарӗ. Хӗр аякран — тутӑр хӗррипе вӑрттӑн Саня ҫине пӑхкаласа — кӗтӳ хӑваласа утатчӗ...

...Саня улӑхалла анчӗ. Улӑхра ут кӗтӗвӗ ҫеҫ ҫӳрет. Саня Сурӑм шывӗн хӗррипе утрӗ. Таҫта тӑрлинк-тӑрлинк тутарса тӑрна кӑшкӑрчӗ.

Ак каллех тӑрна кӑшкӑрать. Саня халӗ те улӑхрах иккен. Мӗн тума килнӗччӗ-ха вӑл кунта? Тӑхта-ха! Питӗ-питӗ кирлӗ ӗҫ тума килнӗччӗ. А-а! Ут тытма! Унӑн пӑвӑр кӗсре тытса утланмалла. Авӑ вӑл, кӗвен ут, ҫӗре ҫитиех вӑрӑм пурҫӑн ҫилхеллӗскер. Ма тарать-ха вӑл? Аякран пынӑ чух чиперех тӑрать-ҫке, авӑ вӑл куҫранах пӑхать, алла ҫеҫ тӑсмалла. Шыва кӗрсе кайрӗ? Апла ун хыҫҫӑн шыва кӗмелле? Сивӗ иккен шывӗ. Юрать-ха тӗпӗ хытӑ, тарӑнӑшӗ те — пырать — пилӗкрен иртмерӗ... «Пах-пах! Тӑхта, мӑй айӗнчи антӑрлӑхне ҫеҫ ҫыхам». Ма лӑпкӑ тӑмасть-ха вӑл? «Ну, ну, чипер тӑр!» У-у! Мӗн ку? Лаша тапса сикрӗ? Мӗнрен хӑрарӗ-ха? Кӗтӳҫ? Вӑл-ҫке пушӑпа шартлаттарчӗ. Ҫавӑнтан хӑрарӗ ӗнтӗ. Тӑхта-ха? Ӑна чиперех тыттарчӗ-ҫке ут. Ав кӗтӳҫ ун ҫине утланса та ларчӗ? Кам вӑл? Ҫамрӑкскер пулас? Ав вӑл каллех пушӑпа сулать...

...Саня шарт сиксе вӑранса кайрӗ. Ӑна чӑпӑркка сасси вӑратрӗ. Чӑпӑркка сасси хальхинче шартлатса мар — чанклатса илтӗнчӗ.

Саня йӑмӑкӗ сӗт витрипе чӑнкӑртатса ӗне сума тухрӗ иккен.

— И-и, ис-пӑс,— илтӗнчӗ амӑшӗн сасси.— Хуллентерех хупма юрамасть-и алӑка? Пиччӳне ҫывӑрма памастӑн ӗнтӗ.

Саня арпашӑннӑ ҫиттие туртса майларӗ те каллех чӑмӑртанса выртрӗ.

* * *

Йӑмӑкне Саня кӗпе якаттарчӗ, хӑй ботинкине ҫутатрӗ. Тумлансан чылайччен ҫӳҫне турарӗ, вара ботинкисемпе чӑкӑртаттарса алӑкӑн-тӗпелӗн уткаласа ҫаврӑнчӗ те каллех тӗкӗр умӗнче чарӑнчӗ.

— Ҫарамасах каятӑн-и? Ҫаҫ енне сулхӑн пулӗ, ачам,— терӗ амӑшӗ ывӑлне ытараймасӑр сӑнаса ларнӑ май.

Ывӑлӗ унӑн, ашшӗ пекех, яштак, тӑпӑл-тӑпӑл та кӗр-

нек кĕлеткеллĕ, сарлака хул çурăмлă. Куçĕ те ашшĕн пекех хура, пăхнă чухне кăшт хĕсĕнет.

Шурă пурçăн кĕпе ăна питĕ килĕшет: сăн-пичĕ çутăрах курăнать, питри кашни шухăш йĕрĕ паларнă пек.

— Леш енне те кĕрсе тух, Сухвисем патне,— терĕ амăшĕ ывăлĕ алăкалла утнă чух.

— Килте çук пуль халь вĕсен никам та. Мĕн тăвас ман унта кĕрсе?

— Сухвийĕ килтехчĕ-ха паян. Çĕпре илсе килтĕм,— терĕ амăшĕ çав-çавах ывăлĕнчен куç илмесĕр.— Эсĕ именчĕк темшĕн. Хула çыннисем хăюллăрах пулаканччĕ. Кĕр, калаç... Мĕнле пурăнатăр те. Мĕн ĕçлетĕр... Амăшĕ те сана питĕ килĕштерет...

Саня алăк патĕнчен каялла çаврăнса кантăк умне пырса тăчĕ те чĕмсĕррĕн чӳречерен пăхрĕ, унтан тепĕр чӳрече патне пырса тăчĕ.

— Эпĕ Меркурие ярам-и санпа пĕрле?— терĕ амăшĕ асăрханусăр.

— Мĕн тума?— хăвăрт ыйтрĕ Саня.

— Иккĕн сăмах тума авантарах,— терĕ амăшĕ кăмăллăн.— Пĕрин сăмах пĕтсен тепри хушса хурать...

Саня хăй ăшĕнче кулса илчĕ те амăшĕн кăмăлне хуçасран нимĕн те шарламасăр пӳртрен тухрĕ.

Хĕвел ĕнтĕ кăнтăрла хыçнелле сулăнать. Вĕри сывлăшра пӳрт çийĕсемпе, юпасен çумĕпе, йывăç тăррисенче ăшă шевли чĕлтĕртетсе тăни курăнать. Нӳрĕрех вырăнсенче çул çинче шăнасем нăйлатаççĕ.

Саня хăйсен тĕлĕнчи çавра пĕве хĕрринче чарăнса тăчĕ. Пĕви ăшăхланнă, хăрах енĕпе, куç хăрпăкĕсем пек, калта калчи ӳссе ларнă. Сĕвек çыранта сарă супăнь курăкĕсем саркаланса çĕр çумне сыпçăннă.

Саня пĕве пуçĕпе иртме хăймасăр пĕр ăстрăм çырма леш енчи шатрун çурт çинелле именчĕклĕн пăха-пăха илчĕ.

Мĕнле кĕрес-ха унта? Сухви патне килтĕм тес-и? Ним йӳтĕмсĕр кĕрсен амăшĕ мĕн калĕ?

Сухви амăшĕ тĕшмĕшлĕрех, ĕлĕкхи йăла-йĕркене çирĕп тытса пырать тенине Саня илтнĕ. Пĕр-пĕр халиччен вĕсем патне пыман çын ним сăлтавсăр пырсан вăл леш кайсанах ун хыççăн тухса «мĕн шутпа килтĕн — пуçнах пултăр» тесе куркапа «хăна» кайнă еннелле шыв сапать имĕш. Юн кун йывăр кун тесе çăкăр та пуçламасть тет — пуçламан çăкăр килте тăнă çĕртех кивçен кайса илет. «Кăвас йӳçмест» тесе уйăх çаврăнмасăр кăвас хумасть, сăра йӳçĕтме лартмасть. Малашне мĕнле çанталăк пулассине те уйăх

хăçан çаврăнни тăрăх тĕп-тĕрĕс каласа парать-мĕн...

Халĕ Саня унта кайсан мĕн тейĕ-ши ĕнтĕ вăл?

Тепĕр тесен, мĕнех вăл мĕн калани? Çĕнĕ самана çыннин ват карчăк мĕнле хак пани пирки пăшăрханмалла-и?

Саня аллинчи чул катăкне çилĕллĕн сулса çыран хĕррине печĕ. Вăл пăрахнă чул тĕлĕнчен çырантан пĕр шапа чăмрĕ, тăрă шыв тĕпĕнчен пăтранчăк йĕр çаврăнса çĕкленчĕ. Шапа тепĕр çĕртен шыв çине пуçне кăларчĕ те пăнк! пăмк! терĕ.

Саня пĕве пуçĕнчен хăвăрт иртсе хăюллăн шатрун çурт еннеле утрĕ...

* * *

...Саня вĕрлĕк алăка хурлăн кăшкăртса уçрĕ.

Крыльца картлашки çинче ларакан çарран хĕр çӳç уçатчĕ. Вăл çĕрех перĕнсе тăракан йĕс тĕслĕ çăра çӳçĕн хăрах енчи сĕвемне сирсе хăрах куçĕпе кил карти алăкĕ еннелле пăхса илчĕ те ура çине сиксе тăчĕ. Анчах чул çине такăнса кукленсе анчĕ. Вара кăшт уксахларах пахча алăкнелле вĕçтерчĕ. Сӳтсе сапаланă çӳçĕ айĕнче унăн çурăмĕ те, кĕлетки те курăнмарĕ. Хĕр хыçалта çыртăнса ларнă йӳле пилĕклĕ кĕске пӳс кĕпине хăвăрт туртса юсарĕ те пахча алăкне шалтлаттарса пахчара çухалчĕ. Çатан карта хушăкĕнчен пĕр самант шап-шурă чĕркуççи кукрашкисем вĕлтлетсе тăчĕç.

Саня ăна çăвар уçса сывлăх сунма та ĕлкĕреймерĕ. Вăл çӳллĕ картлашкапа хăпарчĕ те пăлтăра выльăхкачка кĕрсе каясран алăка хăяккăн хунă пĕчĕк сак урлă каçрĕ. Уçă пăлтăр умĕнче пӳртре çын пур-и, çук-и тесе пĕр самант тытăнса тăчĕ; шалтан пĕчĕк ача сасси илтĕнсен хăюллăнах урата урлă ярса пусрĕ.

— Ман килес,— терĕ вăл тӳрех малалла иртсе.

Сухви инкĕшĕ чĕрçинчи ачине сак çине лартса, килнĕ хăнашăн хыпкаланнă пекех, тур кĕтессинчи ăпăр-тапăра пуçтара пуçларĕ.

— Килех,— терĕ вăл тĕпелелле утса; тепĕр самантран вăл тĕпелтен мăшкăлтăк шыв витрине йăтса тухса кайрĕ.

— Çтаппанĕ ăçта кайрĕ ара?— тесе хăварчĕ вăл кайнă чух.

— Пускилте пуль,— илтĕнчĕ тĕпелтен.— Те тăвар шывĕ сапнă унта ун валли...

Ку — Сухви амăшĕ пулчĕ. Вăл кăмака умĕнче чарăнса аллипе тем хыпаларĕ те сак çинчи ача патне пырса ăна çамкинчен хăрăмпа сĕрсе ячĕ. Кĕпе тӳми пысăкăш хура

çавра пăнчă, Инди хĕрĕсен пек, икĕ куç хушши тĕлне ларчĕ.

— Ан куçăхтăр-ха,— терĕ карчăк куна мĕн пирки тунине ăнлантарса.

Кунта тĕшмĕшлĕх мар, халăх медицинин темĕнле ăслăлăхĕ, авалтанах юлнăскер, пулнă пулас. Ют çын ачан çамкинчи пăнчă çинче чарăнса ăна тӳрех куçран пăхса куçăхтарасран сыхлать тенине илткеленĕ Саня.

Часах карăнкаласа, куçĕсене ыйхăланă ача пек сăтăркаласа пĕр вăтăралла пуснă сарă çӳçлĕ, хĕрлĕ сăнлă лутрарах çамрăк кĕчĕ. Ку — Сухви пиччĕшĕ.

— Хăна пур-çке!— терĕ вăл пырса Санькăна ал тытса, унтан сĕтел умне пукан çине ларчĕ те ыйхăллă сасăпа арăмне чĕнсе илчĕ.— Анукка! Çавăнта юлчĕ-и кăштах? Ăш хыпрĕ ман.

Сĕтел çине сăра кăкшăмĕ, пĕр тулли пулштух тухса ларчĕ, вучахра «ятлаçа-ятлаçа» çатăртатса-сурса йăмра çатраки çуна пуçларĕ.

Кĕçех çӳçне пуçтарса çыхма ĕлкĕрнĕ Сухви пĕр çĕклем тип шанкă йăтса кĕчĕ те Саня çине куç уçса пăхмасăрах, именчĕклĕн пуçне чиксе хăвăрт тĕпеле иртрĕ. Чăланта амăшĕпе тем пăшăлтатса илнĕ хыççăн каллех пӳртрен чупса тухрĕ.

Кăшт тăрсан вăл чăлт шурă та йĕпеннĕ шур çеçке пек витĕр курăнакан кĕпепе, аркине икĕ рет кăвак, хĕрлĕ хăю тыттарнă симĕс пурçăн саппунпа, шăлан çеçки тĕслĕ патис тутăрпа кĕчĕ. Хыçалта — ал лаппи сарлакăш пилĕк хуçламĕ, вăл çинçе пилĕке тирпейлĕн çупăрласа тăрать. Кĕпе аркинче икĕ рет чĕнтĕр тата виçĕ мăшăр ансăрăн хуçлатса çĕленĕ йăртăк çума-çум тăсăлать.

Пылаклантарнă сăра часах пуç патне пычĕ. Çтаппан кăçал малтанхи аслати сасси анăçалла авăтса кайни çинчен, çавăнпа, вăл шутланă тăрăх, Микул кунĕ иртмесĕр çумăр çăвас çукки тĕрĕс пулни çинчен каларĕ. «Кăçал якуричченех ăшă анчĕ, чĕкеçсем килчĕç. Сурăм пуххи хыççăнхи кунсем сивĕрех пулаççĕ»,— терĕ.

Саня итлесе çеç ларчĕ: халăхăн çанталăк паллисене вăл пĕлместь.

Сухви кантăк умĕнче хăнана тӳртĕнрех ларса те тĕрĕ тĕрлет, те сăмса тутри хĕрри пӳклет.

Вăл Саня килнĕренпе те çăвар уçмарĕ-ха. Саня унăн сассине те илтмерĕ. Тутине чăпăрт тытса ларакан хĕр Саня хăй çинелле пăхман чух ун еннелле хăвăрт куç ывăта-ывăта илет. Саня хĕре хирĕçех ларать пулин те ун çинелле ăнсăртран пек çеç пуçне çĕклекелет.

Тутăр кĕтесси хĕррипе Саньăна тăп ларакан лĕпĕш çунатти пек вăрăм куç хăрпăкĕсем курăнаççĕ. Вĕсем Саня хĕр çине пăхсанах, такам кĕтмен çĕртен пырса перĕннĕ пек, канăçсăррăн мăчлатма тытăнаççĕ.

Çтаппанпа Саня икшер черкке сыпнă тĕле алăк яриех уçăлчĕ те, пÿрте хашкине ернĕ Меркури, пĕр вăтăр пиллĕксенелле çывхарнă çинçешке те типшĕм арçын, кĕрсе тăчĕ. «Ула курак какай шăршине вун икĕ çухрăмран сиснĕ пек, Меркури те сăра-эрех шăршине таçтанах сисет»,— теççĕ ун пирки ялта. Меркури черкке тĕлнех çакланнă пирки «хуняма савать иккен мана» текелесе пурне те ал тытса тухрĕ те сĕтел пуçне ларчĕ. Çтаппан ăна çинеçинех темиçе черкке эрех тултарса пачĕ.

Çук сăмахранах калаçу тума ăста Меркури хăй калас сăмахне шутарса пыма кам та пулин çăвар уçасса çеç кĕтрĕ.

— Тем шăм-шак сурать-ха паян... Те ыран-паян çумăр пуласса,— терĕ карчăк ăна сăра курки тыттарнă май.

— Çумăрĕ-мĕнĕ,— терĕ Меркури,— ватăлатăн пулĕ ĕнтĕ, кинеми. Туйи кĕскелсех пырать пуль. Хĕрÿсене качча парса та пĕтерейменĕ ак.

— Хĕрĕсем кайĕç-ха вĕсем. Шăтăклă шăрçа çĕрте выртман.

— Выртĕç те, кинеми. Хĕрне хăвăнах качча памалла. Вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Акă качча ларать. Мĕнрен начар? Тавай туй тăвар...

Меркури те шÿт тăвать, те чăнласах калать — ун сăнпитĕнчен ку пачах палăрмасть. Сухви Меркури сăмаххисене илтсен хăвăрт пÿртрен тухса кайрĕ.

Санькăна та ăшă пулчĕ. Вăл уçăлма тесе тулалла тухасшăнччĕ çеç — ун çумне Меркури куçса ларчĕ те ăна мăнкăмăллăн çурăмĕнчен çапса илчĕ.

— Ĕç тухать,— терĕ вăл, унтан Саня хăлхи патнех тем пăшăлтатса вăрттăн сăмах калас пек пĕшкĕнчĕ те:— Ĕç тухать!— терĕ хыттăнах.

Саньăна Сухви амăшĕпе унăн ывăлĕ умĕнче аван мар пулса кайрĕ, Меркури мыскарисем чуна вĕчĕрхентерчĕç. Мĕн кирлĕ мар сăмах лĕпĕртетет вăл?.. Выранлă-юравлă пуплинччĕ. Саня шăлне çыртрĕ те — хĕрелсе кайрĕ.

— Эпĕ кăшт туртма тухса кĕрем-ха,— терĕ вăл ура çине тăрса.

— Ҫунтах турт ара,— терĕ Сухви амăшĕ.

— Тухтăр ĕнтĕ,— терĕ Меркури.— Çăтса лар-ха кунта ун тĕтĕмне...

Саня хăвăрт пÿртрен тухрĕ.

4

Ҫенӗкре пите уҫӑлтарса тӳрех уҫӑ сывлӑш ҫапӑнчӗ. Саня крыльца ҫине тухрӗ. Сухви крыльца картлашкин карлӑкӗ ҫине таянса тӑрать. Саня тухсан вӑл канӑҫсӑррӑн пӑркаланса хӑй сисмесӗрех хӑрах урине ҫӗре тапса илчӗ.

Саня та чарӑнчӗ. Вӑл та нимрен сӑмах пуҫарма аптраса шӑпах тӑчӗ.

— Ҫайрӑн-и мӗн?— терӗ хӗр именчӗклӗн ун енне пӑхса илсе.

— Ҫаймалла та пулӗ...

— Нумайлӑха килтӗн-и?— каллех ыйтрӗ Сухви.

— Икӗ кунлӑха ҫеç. Ыран ҫаймалла пуль,— терӗ Саня хуллен, унтан вӑл тахҫанхи тусӗпе калаҫнӑ пекех кӑмӑлшухӑшне уҫса парса калаҫма тытӑнчӗ.— Тахҫанах килес килет — ниепле те хӑпса тухма ҫук хуларан. Унта халь сывлӑш пӑчӑ, тусан. Ялта ак питӗ аван иккен. Пачах урӑх тӗнче. Ҫут ҫанталӑкпа киленсе тӑранма ҫук. Пӗр кун пурӑнма — пӗр ӗмӗр...

Хӗр ача картлашка ҫинчен чупса анчӗ те урамран кил картине кӗресшӗн нӑйкӑшса алӑка тӗрткелекен сысна ҫурине уҫса кӗртрӗ.

— Чие ҫырли ҫиес килет-и?— терӗ вӑл именчӗклӗн хӑй пахча еннелле утнӑ май.

Вӗсем сайхалӑх витӗр пахчана тухрӗҫ. Улӑм витнӗ лупас аркине йӗри-тавраллах ҫерҫисем йӑва туса тултарнӑ. Вӗсем йӑвисене тӗкӗнесрен хӑранипе ниҫта кайса кӗреймесӗр чав-чавлатса пуҫ тавра вӗҫрӗҫ.

Вӑрӑм хӑмла шӑччисен сулхӑнӗнчи чие тӗмисене те хӑмла пултӑранкисем явалаҫа илнӗ. Унта кролик куҫӗ пек чие ҫырлисем хӗп-хӗрлӗ курӑнаççӗ, вӗсем шалтан хӗрлӗ вутпа ҫутӑлса тӑнӑн туйӑнать, хӗвел ӳкнӗ тӗлте йӑлтӑртатать.

Сухви асӑрхануллӑн пускаласа чие тӗми хушшине кӗрсе кайрӗ.

— Ку вӑл макӑра чие,— терӗ Сухви тӗмӗ ӑшӗнчен.— Ҫур, вӗсем куççуль тумламӗсем пек усӑнса тӑраççӗ...

Саня виç-тӑватӑ ҫулхи ҫамрӑк улмуççи умӗнче чарӑнчӗ.

Сухвирен инҫех те мар чие кайӑкӗ «чи-е», «чи-е» текелесе илчӗ. Сӑмсана сулхӑнри вӗлтӗренпе чӗрӗ хӑмла шӑрши кӑтӑкларӗ.

Сухви пӗр йӗкӗр ывӑç чие татса тухрӗ.

— Ҫӗрсе тат,— терӗ вӑл хӑюсӑррӑн та ютшӑнчӑклӑн.

Саня хĕр енне çаврăнчĕ те хăрах аллине хуллен çамрăк улмуççин пысăк улми патне тăсрĕ.

— Эс мана çакна çитер-ха?— терĕ вăл ыйтуллăн.

Сухви сасартăк шарт сикрĕ.

— Çук, çук!..— терĕ вăл Саня патнелле ыткăнса.— Ан тив... Юрамасть...

Сухви каччă аллине сирчĕ те ун çулне пӳлсе хучĕ.

— Мĕншĕн?— кăмăллăн кулса илчĕ Саня.

— Ку вăл ман вăрттăнлăх. Ав ват улмуççисенне тат,— хĕр пуçĕпе тепĕр пысăк улмуççи еннелле сулчĕ.

— Шел ĕнтĕ... Иккĕ çеç те,— Саня таса та йăрăмлăн-йăрăмлăн хĕрлĕ панулми çине ăшшăн пăхрĕ.

— Шел,— терĕ Сухви, унтан ывăçне тăсрĕ.— Акă чие çи...

— Çук. Чие мар, ман çĕмĕрт çиес килет.

— Ав çĕмĕрт.

— Ку тутлă мар,— терĕ Саня пĕр сапакине тутанса пăхса.— Атя, тутли тĕлне илсе каям.

— Аçта?

— Вăрмана... Унти питĕ тутлă... Шултра та мăнтăр...

Сухви каччă çине куçне чарса шиклĕн пăхса илчĕ.

— Каяр-и?— Саня хĕре аллинчен туртрĕ.

— Уй,— терĕ хĕр самантрах вĕçерĕнсе.— Мĕн питпе çын умне курăнас вара ман? Мĕн калĕç?

— Мĕнех-ха иккĕн вăрмана кайнăшăн? Çынсем каяççĕ-çке.

— Çын сиккине сиксе çитереймĕн...

— Ман пирки те тем калама пултараççĕ. Эпĕ хăрамастăп-çке.

Хĕр çаплах пуçне чиксе тăчĕ.

— Хăвна манпа шай ан ту,— сăмах тавăрчĕ вăл.— Сан уру йĕрне пусса çитереймĕн ĕнтĕ. Хĕр çине кантăк витĕр уйăх пăхсан та ят сарăлать те... Унта чакаксем нумай...

Хĕр пĕр ăстрăм витĕр курăнакан симĕс шăрçа ярăмĕ пек йĕплĕхен çырли çупкăмĕсене суйлакаласа тăчĕ.

— Атя,— терĕ Саня ăна каллех аллинчен туртса, вара хăй çĕрулми кассисем хушшипе утрĕ.

— Унтан мар... Шăлаварна варалатăн,— терĕ Сухви. Вăл каччă хыçĕнчен кăштах пăхса тăрсан сукмак çине тухрĕ.

Вĕсем ним чĕнмесĕрех пахча карти урлă каçрĕç те йывăррăн кăштăртатакан симĕс шерепеллĕ, тĕл-тĕл çил хуçкаласа çатралатнă хăмăллă çĕлĕ ани урлă выртакан

сукмакпа вăрманалла утрĕç. Сухви тек-текех ял еннелле пăха-пăха, хăра-хăра утрĕ, таçта васкарĕ.

Саня вара юриех васкамасăр, хăй ăшĕнче кăмăллăн кулкаласа илсе ним чĕнмесĕр пычĕ. Хир ирĕкĕ, уй анĕ, куç ытамĕнчи сенкер инçет — ун кăмăлне çĕклентерчĕ.

Сурăм улăхĕ хěрринчи парлакра кĕтӳ çӳрет. Таçта пĕччен çава вăшкăнать. Хăмăл хушшинче уяр шăрчăкĕсем чăрăлтатаççĕ. Сĕлĕ ăшĕнче тĕл-тĕл, сухал кăпăкламалли сĕркĕч пек, хĕрлĕ авăрлă, шурă çемçе мамăклă уй пиçенĕн пуçĕсем сулланаççĕ, хушшăн-хушшăн ана çийĕн ир пулнă хурхухăн, пиçенĕн кĕлт çиппи пек мамăкĕсем вĕçе-вĕçе иртеççĕ. Вăрман хĕрринчи телефон юпи тăрринче пĕр хăлат, уй хуралçи пек, тавралăха сăнаса ларать. Пĕтĕм çак тавралăха ылтăн ярăмлă хĕвел пайăркисем тăкăнаççĕ.

Сурăм леш енчи улăх çине пĕр лаптăк тĕксĕм мĕлке саркăмĕ ӳкнĕ те — пĕчĕк пĕлĕт кусна май ерипен кунталла шăвать.

Сухви вăрман хĕррине çитсен куршанак тĕми патĕнче чарăнса тăчĕ.

— Малалла каймастăп эпĕ,— терĕ вăл.

Санька хаваслăн ахăлтатса кулса ячĕ:

— Мĕншĕн?

— Çитет кун чухлĕ килсе...

Хĕр куршанаксене тата-тата чăмăрта пуçларĕ. Санька йытă çĕмĕрчĕ умĕнче чарăнса тăчĕ. Йытă çĕмĕрт йывăççин хăш-пĕр çырлисем пиçме те тытăнман: сип-симĕс, сулхăнтарахрисем — шурă. Пĕтĕм йывăçĕ вара — пĕр турат çинчех тăватă тĕслĕ çĕмĕрт ларнипе — хĕрлĕ, симĕс, хура, шурă шăрçасем çакса тултарнă пек курăнать.

Авăсăн сайра та хытă çулçисем шĕлтĕртетсе лараççĕ. Пĕчĕк юман тураттинчен шатрашкаллă калпак тăхăннă пӳнеслӳ пек пĕчĕк йĕкелсем пусхĕрлĕ çакăннă.

Вăрман ирĕксĕрех хăй ытамне астарать...

Сухви те ирĕксĕрех тутăрне ĕнсе хыçнелле сирсе антарчĕ. Аллинчи куршанак чăмăрккине йăвалана май вăрманăн кăчăк туртакан илемлĕхне парăнса пуçне шухăшлăн çĕклесе тытрĕ те икĕ йывăç хушшипе курăнакан çамрăк хăртне çумĕнчи пĕчĕк уçланкалла пăхрĕ. Унта, Паттиер ĕшнин хăрах сĕвеклĕхĕнче, выляса ларакан пĕчĕк ачасен кăтра пуçĕсем пек, хăлха çакки куракĕсем чӳхенкелеççĕ. Шалта вĕт кайăксем савăшаççĕ.

Санька çав-çавах хĕре тепĕр хут чĕнме хăймарĕ.

Ун умĕнче пĕр вăхăт таçтан вĕçсе килнĕ вĕтĕ-вĕтĕ ӳпре тĕрки çаврăнса, пĕтĕрĕнсе, пăтранса тăчĕ, пысăклан-

чӗ-пӗчӗкленчӗ, саланчӗ-чӑмӑртанчӗ, пӗр еверлӗн нӑйӑлтатрӗ. Тепӗр самантран ҫил касси килсе ӳпре ҫӑмхине вӗрсе салатрӗ, таҫта ял еннелле вӗҫтерсе кайрӗ.

— Ҫур-ха мӗнешкел илем!.. Шӑрҫа ҫакнӑ пек!..— йытӑ ҫӗмӗрчӗ ҫине кӑтартрӗ Саня.

Сухви сасартӑк аллисене саркаларӗ те ансӑр сукмакпа чупсах уҫланкалла анса кайрӗ.

Тепӗр самантран Санька ӑна уҫланкӑ хӗррипе пӗшкӗне-пӗшкӗне ҫырла пуҫтарнине курчӗ.

Хурӑн ҫырли, ҫӗр ҫырли уҫланкӑ варринче мар — йывӑҫсен сулхӑнӗнче ӳссе ларнӑ. Вӗсем темшӗн Санькӑран пытанаҫҫӗ, те Санька вӗсене хӑй шырама пӗлмест...

— Ак манӑнне ил.— Хӗр хӑрах ывӑҫне Саня еннелле тӑсрӗ. Сухви пичӗ малтанхинчен хӗрлӗрех. Тутӑрӗ халь унӑн, пионер галстукӗ пек, мӑйӗнче ҫакӑнса тӑрать.

— Сурӑм пуххиччен те пурӑнмастӑн эппин?— сасартӑк ыйтрӗ хӗр.

— Ун чухне, тен, килетӗп те.

Санька чӗринче — темӗнле виҫесӗр хаваслӑх еккипе хутӑш — чӗлхе-ҫӑвара ҫыхакан кансӗрлӗх, айванла иментӳ, хӗре тӳррӗнех куҫ хӑйса пӑхма чараканскер, хускалчӗ. Вӑл тек-текех енчен енне пӑхкаларӗ.

— Сана кӑҫал Сурӑм пуххинче вӑрласа каяҫҫӗ тет-и?— терӗ Санька сарӑмсӑррӑн хӗр ҫинелле пуҫне ҫӗклесе.

— Ҫам калать?..— хӗр ӑшшӑн йӑл кулчӗ.

— Ялта калаҫаҫҫӗ...

Сухви эреветлӗн кулса ярса аллинчи куршанак чӑмӑрккине Саня ҫинелле вӑркӑнтарчӗ. Куршанак чӑмӑрки ҫӳхе кӗпе витӗр кӑштах ыраттарса сулахай кӑкӑр ҫине ҫакӑнса ларчӗ. Сухви тата янравлӑрах кулса ячӗ, вара ҫӳллӗ йывӑҫсем хушшипе каякан сукмак ҫине чупса кӗчӗ. Санька ун хыҫҫӑн утрӗ.

Сухви хӑйӗн ӗлккен уттипе вӑйӑ картинчи пек кӑшт ярӑнарах утать. Вӗсне симӗс хӑю янӑ вӑрӑм ҫивӗт тунисем ҫурӑм хыҫӗнче ҫапӑнкаласа сулланаҫҫӗ. Унӑн кӑпӑшка ҫӳҫлӗ пуҫӗ ҫинче ҫулҫӑ мӗлкисем вӗлтӗртетеҫҫӗ. Ҫӳллӗ ывӑҫсем айӗнчи чӗрӗ сулхӑна вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн чӗпӗтсе пӗҫертекен вӗри сывлӑш капламӗ килсе кӗрет.

Санька сукмак хӗрринчен шурӑ пӗчӗк шӑрҫа пек ҫеҫкеллӗ чечек туни татса илчӗ.

— Лантӑш мар-и ҫак?— терӗ вӑл.

Сухви каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ те малаллах утрӗ.

— Ҫамшӑн мӗн,— терӗ хӗр.— Саншӑн тутлӑ шӑршӑллӑ лантӑш. Эпир ӑна ниш курӑкӗ тетпӗр. Хӗне кайнӑ ҫынна сиплӗ вӑл.

Çӳллӗ йывăçсем айӗнчи сулхăнран тухсанах вӗсене ăшă сывлăш юхăмӗ çавăрса илчӗ. Ҫунта, çич-сакăр çул каялла каснă вăрманта, пӗр пысăк талккăш çамрăк юман, шӗшкӗ, улмуççи, çӗмӗрт ӳссе ларнă. Ҫу вырăнтан çак вар-çырсемпе касăлса пӗтнӗ вӗтлӗх хунав вăрман инçете те питӗ илемлӗн курăнать. Ҫӗмӗрт нумай.

Вӗтлӗхе тухсанах Сухви пӗчӗк лутра çӗмӗрт кутне чупса кайрӗ. Санька ун çумне пырсан вăл тепӗр çӗмӗрт патне кайса тăчӗ. Ҫӗмӗрчӗсем кунта, чăнах та, шултрарах, шывакрах.

— Сана авланма килнӗ теççӗ-çке,— терӗ Сухви сасартăк çӗмӗрт хыçӗнчен паçăр пуçланă калаçăва халӗ тин малалла тăснă май.— Ху ыран каясшăн...

— Ҫам калать?

— Ял çинче калаçаççӗ...

Сухви Санькăна хăрах куç кӗтессипе пăхса илчӗ.

Санька каçăхса кайсах кула пуçларӗ. Хӗр ун çине пӗр самант кӳренчӗклӗн пăхса тăчӗ, унтан мăнкăмăллăн утса йывăç тӗмисем хушшинче çухалчӗ.

Санька тепӗр самантран ун хыççăн кӗрсен — Сухвие тупаймарӗ.

— Сухви!..— чӗнчӗ вăл.

Хирӗç чӗв те пулмарӗ. Саня çулçă чăштăртатнине те пулин илтес тесе пăшт пулса тăчӗ. Ҫӗрелле усăннă туратсем айӗпе пӗшкӗнсе пăхрӗ — çук...

Инçех те мар лутра йывăçсем хушшинче ӗне мăйӗнчи хăнкăрма сасси — е пӗр тикӗссӗн, е канăççăррăн, е сасартăк татăлса — хыттăн хăнкăртатни илтӗнет. Ҫӳлте çунаттисене планер пек ним сулкаламасăр пӗр хӗрен хăнчăр-р! хăнчăр-р-р! текелесе ярănса çаврăнать. Шăрăхпа шаннă шӗшкӗ çулçисем лăстăртатаççӗ. Ӗнтӗркеттерекен шăрăх, пуçа çавăрса яракан уçă сывлăш чуна илӗхтерсе ярать. Пӗтӗм тӗнче, пӗтӗм пурнăç, пӗтӗм çӗр çинчи илем, пӗтӗм телей çакă пек, çакăнта аташса кайса тӗнче илемлӗхӗпе, телейпе ӳсӗрӗлсе çӳрес килет. Ҫутамка çӗмӗртсем те хӗвел хӗртсе пăхнипе йывăçран сăмала пек шăранса тухса тумламăн-тумламăн çакăннă пек туйăнать. Ҫашни çӗмӗрт хӗвеле ӳкерсе пӗчӗк хӗвел пек хӗм сапса йăлтăртатать.

Хӗвел пайăркисем çулçăсем хушшипе чӗлкӗмленсе кӗреççӗ те çипленсе-хӗлӗхленсе чӳхенеççӗ, пӗтӗм йывăçа яваланса каркаланаççӗ. Ҫил вӗрсе килет те, йывăç тăррисем хумханнă май вӗсем хушшине карăннă, ахаль чух çивӗч куçа та курăнман хурçă хӗлӗх пек эрешмен çипписем мӗлке çинчен самантлăха тухса йăлтăртатса илеççӗ, вара каллех пытанаççӗ.

Такам ятран чёнсе кăшкăрчĕ.

Саня пĕчĕк ҫырма урлă каҫсан пысăк ҫĕмĕрт кутĕнче ăшăрханипе хĕрелсех кайнă Сухви тăнине курчĕ те ун патнелле утрĕ.

— Акă пĕрлĕхен ҫи-ха, Сухви...

Хĕр ним сăмахсăрах каччă аллинчен темиҫе сапака пĕрлĕхен илчĕ. Вĕсем пĕр хушă шăпăртах тăчĕҫ. Вĕри хулпа хул перĕнчĕ. Йăпăрка пурҫăн йывăррăн йăшăртатса илчĕ.

— Ывăнмарăн-и?..

Хĕр аллинчи пĕрлĕхенĕсене суйлакаланă май пуҫне сулларĕ.

Пĕр-икĕ самант каллех шăп тăчĕҫ. Унтан сисмесĕрех алăсем пĕрлешрĕҫ. Тепĕр самантран каччă хĕре хăй ҫумне туртрĕ.

— Ҫай, ан тив,— терĕ Сухви шăппăн. Хăй вырăнтан та хускалмарĕ, ҫав-ҫавах пĕрлĕхен пĕрчисене хускаткаласа, пуҫне чиксе тăчĕ.

Таҫта улаппа уларĕ. Пĕр пĕчĕк кайăк тилĕр-р тесе вĕҫсе иртрĕ.

Умри йывăҫ тĕмисем айĕнче шур чечеклĕ кĕпҫесем, типсе сарална, хур шăлĕ пек шăллă-шăллă ҫулҫăллă сухăр вĕлтренсем сулланса лараҫҫĕ. Аялта кутăн шăнкрав пек кăвак чечек, куршанак пуҫлă туна, симĕс хутаҫ ăшне вырнаҫнă мăкăнь пуҫĕ пек курăк чăлханса ӳкнĕ. Ҫĕр ҫумне типсе хăмăрланнă имшеркке тăхран пуҫĕсем лăпчăннă.

Пĕр кана ҫаплах иртрĕ.

Ҫаллех кайăксем юрларĕҫ... Тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăксем...

Сылтăмри шĕшкĕлĕхрен икĕ сасă — те пĕр-пĕрне чĕнсе, те такамран хăраса — канăҫсăррăн вĕт-вĕт-вĕт тесе илчĕҫ. Сулахайран юманпăран кайăк пĕрре ҫирĕппĕн шăтă-ăр! шатă-ăр! тутарчĕ. Ҫывăхарах тепри вăйлă иксӳ тапăннă ҫын пек ҫинҫе сасăпа и-июк! и-июк! теме тытăнчĕ.

Ҫаччăпа хĕр ҫаплах ним чĕнмесĕр ҫума-ҫумăн тăчĕҫ.

5

Хĕвел ĕнтĕ каҫа сулăнчĕ. Ҫур тӳпе — хĕвел енчи — ҫутă сенкер, тепĕр ҫурри — ешĕл шенкер чулĕ тĕслĕ курăна пуҫларĕҫ.

— Сухви,— терĕ Саня сасартăк.— Эпĕ сана Сурăм пуххинче вăрлас пулсан... Мĕн калăттăн-ши?..

Саня ку сăмах ҫинче хăй те хĕрелсе кайрĕ.

Хӗр карт туртӑнса Саня ҫумӗнчен пӑрӑнчӗ.

— Эсӗ шӳт тӑватӑн,— терӗ вӑл кӑшт кайсан.— Сан хуларах темӗн чухлӗ пулӗ.

— Сухви!.. Ёненетӗн-и?.. Ҫук.

— Ан тун,— терӗ хӗр. Вӑл Саня енне кӳренчӗклӗн ҫурӑмӗпе ҫаврӑнса тӑчӗ.

— Сухви!..

— Эсӗ кулатӑн манран. Эсӗ пысӑк ҫын. Ман хам пек тепӗр ухмаха ҫеҫ тупмалла...

— Сухви, мӗн калаҫатӑн эсӗ?

— Ку ним те мар тесшӗн-и? Ҫук. Ан пупле кун пирки: пӗлетӗп. Эпӗ тата качча кайма шутламан та. Каймастӑп та нихҫан та...

— Нихҫан та-и?

Хӗр каллех пуҫне чиксе тӑчӗ, таҫта ҫӗрелле пӑхрӗ.

— Ну, халех мар. Халь ман ҫипуҫ ҫук.

— Хӑҫан пулать вӑл? Сухви! Ҫире пур, урӑх мӗн кирлӗ сана? Пурӑнсан пулать, пӗрле тума ҫӑмӑлтарах та пулӗ. Сухви, кала, пыратӑн-и?

— Кур! Чӗппи те пур!— терӗ Сухви сасартӑк, вутӑ шаршанӗ хушшине улаххӑн йӑва ҫавӑрнӑ пилеш кайӑкӗн йӑви умӗнче чарӑнса.— Шел мӗскӗне...

Саня нимӗн те чӗнмерӗ, таҫта аякалла пӑхса тӑчӗ.

Сухви кайӑк чӗппипе тем аппаланчӗ. Унтан сӗрӗмленекен вӑрман тӑрринелле хӗвеле хирӗҫ ал айӗн пӑхрӗ те шартах сикрӗ.

— Ай!.. Ман киле каймалла!

Хӗр сукмак ҫинелле вӗҫтерчӗ.

Пӗчӗк тӑвайккинчен хӑпарнӑ чухне Саня ӑна алран тытрӗ. Хӗр турткалашмарӗ. Вӗсем каллех паҫӑр килнӗ сӗлӗ ани урлӑ выртакан сукмакпа утрӗҫ. Хӗвел анса та ларчӗ. Шӑм-шака кӑштах каҫхи сулхӑн ҫӳҫентерчӗ. Улӑхра таҫта текерлӗк кӑвиклетрӗ. Сурӑм шывӗ ҫинчен ҫӑра тӗтре йӑсӑрланса хӑпарчӗ.

Вӗсем паҫӑрхи ҫулпах Сухвисен тӗкме карти урлӑ каҫса пахчана кӗчӗҫ. Кӑтра ҫӳҫлӗ кишӗр ани ҫумӗпе иртрӗҫ.

Улма пахчине ҫитсен Сухви сасартӑк Саньӑна ҫаннинчен тытса чарчӗ:

— Тӑхта-ха кӑштах...

Хӗр паҫӑр Саня чарӑннӑ ҫамрӑк улмуҫҫи патне чупса кайрӗ...

Сухви пӗр самант тытӑнса тӑчӗ. Пӗрре хурлӑн улмуҫҫин икӗ кӗрен улми ҫине, унтан каллех шиклӗн куҫ харшисене пӗрсе Саня ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ, юлашкинчен сӑн-

питне кӑмӑллӑн ҫемҫетрӗ те татӑклӑнах улмуҫҫи енне ҫаврӑнса тӑчӗ.

Саня хӗрӗн алли епле чӗтренсе улма патнелле ҫывхарнине, улми епле чуна ыраттармалла ҫатлатса таталнине курмарӗ-илтмерӗ.

Хӗр пӑчӑр хӗрлӗ пысӑк панулмине ним сӑмахсӑрах Саня еннелле тӑсрӗ.

— Атя ларар,— терӗ хӗр.

Вӗсем ҫамрӑк ӑвӑссем хушшинчи уҫӑ вучах умне, ҫӗре ӳпӗнтерсе хунӑ кӗпе вӑлашки ҫине, ларчӗҫ.

Саня шывакрах сӗтеклӗ панулмине ним чӗнмесӗрех ҫирӗ, хӗр хӑйӗнне ҫав-ҫавах аллинче тытса ларчӗ. Кӳршӗ ял урамӗнчи репродуктортан каскӑн ҫил тӗл-тӗл тулашакан, тӗл-тӗл тем ирӗлнӗ пек шӑранса тӑракан ҫемӗллӗ темӗнле кӗвве вӗҫтерсе килсен Саня сасартӑк сывлама чарӑнса тӑнла пуҫларӗ.

— Ҫав кӗвве кам ҫырнӑ, пӗлетӗн-и?— ыйтрӗ вӑл самантран.

Хӗр сасартӑк чӗтренсе ҫӳҫенчӗ те каччӑ ҫине ӑнланма ҫук асаплӑн куҫ ывӑтса илчӗ.

Саня куна асӑрхамарӗ. Вӑл панулмирен темӗнле майпа хӑй аллинех тӑрса юлнӑ йӑпӑлкка вӑрра хыпаласа ларчӗ, ӑна вӑл икӗ пӳрне вӗҫӗпе хӗстерсе тытрӗ те — пусрӗ, панулми вӑрри сиксе тухса кайса хӗре питӗнчен тиврӗ. Саня хаваслӑн кулса ячӗ.

— Сухви!— терӗ вӑл ӑна аллинчен тытса.— Сухви... Пыратӑн-и?.. Қала татӑклӑ!..

Сухви туртӑнчӗ те сиксе тӑчӗ. Сулахай аллине пуҫ урлӑ сулса ячӗ. Аслӑк хыҫӗнчи сухӑр вӗлтӗрен тӗми ӑшӗнче чашлатни илтӗнчӗ — ку панулми пулчӗ...

Сухви сасартӑк вырӑнтан хускалчӗ те ӑвӑслӑх айӗнчен чупса тухрӗ. Тепӗр самантран анкарти енчи ҫатан ҫатӑртарӗ, тата тепӗртакран ҫенӗк алӑкӗ йывӑррӑн хӗсӗнсе хупӑнни илтӗнчӗ.

Саня ним ӑнланмасӑр аптраса тӑрса юлчӗ. Вӑл Сухвисен кил карти витӗр урама тухрӗ. Сухвисен ҫутӑ курӑнмарӗ.

Тӳпере пӗр кӗтесре ҫеҫ ҫӑлтӑрсем чӗлтӗртетеҫҫӗ. Таҫтан хуп-хура ҫумӑр пӗлӗчӗсем тапса тухрӗҫ.

* * *

Қавак ҫутӑлла ҫанталӑк чиперехчӗ. Ир енне урам еннелли кантӑк умӗнчи ҫамрӑк хурӑн шӑнӑр туртнӑ пек шарт сиксе ыйхӑран вӑранчӗ те, шӑм-шакне ҫемҫетнӗ пек,

авкаланса, карăнса илчĕ, вара хуллен шĕпĕлтетме тытăнчĕ.

Самантран вара Саня пӳрт çине витнĕ хĕç тимĕр çинче ташлакан тумламсен сассипе вăранса кайрĕ.

Çумăр пĕрре чарăннă пек пулчĕ, унтан каллех капланса килчĕ.

Вара хĕвел мĕн каç еннелле сулăниччченех юнтармăш ача пек кун тăчĕ.

Саня кайма хатĕрленсенех малтан пачах курăнман, таçта пытанса тăнă катрамлă пĕлĕтсем питĕ аялтан вирхĕнсе çитеççĕ. Саня каялла кĕрсенех çумăр витĕрех хĕвел пăхса кулса ярать. Вара, чăркăш çанталăк кăмăлне юрама тăрăшнă пек, Малтивар катинче кайăксем те юрла пуçлаççĕ. Çул та типшĕрсе кушăхать, курăк та типет...

Саня чăматан йăтса уй хапхине çитсен каллех çумăр тăкса ярать. Каллех çул йăпăлкаланса каять, сăрхăнма ĕлкĕрнĕ лупашкасем çĕнĕрен тулса лараççĕ. Каллех ял кĕтĕвĕ, уя тухма çеç ĕлкĕрнĕскер, шăнса хутланнă сысна çурисем çĕхĕрнипе, амăшĕсене çухатнă путексем, путекĕсене çухатнă амăшĕсем макăрнипе янăрашса яла кĕрсе каять.

— Паян каяс шутпах кун кунларăн ĕнтĕ,— терĕ амăшĕ те юлашкинчен.— Ахалех кайма пуçтарăнтăн. Çак пылчăклă çул çинче паян эсĕ пурпĕрех пĕр машина та тĕл пулаймастăн... Элле, ĕçне туса та пăрахмаллаччĕ. Ахалех каяс шутпа кун кунларăн.

Саня кантăк витĕр пӳрт çи хĕрринчен пĕрре сӳтĕлсе, тепре явăнса такам çӳлтен пăлхатса-вылятса тăнă пекех сулланса юхакан шыв кантри çине пăхса тăчĕ. Амăшĕ «ĕçне туса пăрахмаллаччĕ» тени мĕне пĕлтернине вăл тӳрех ăнланчĕ: Сухви пирки калать...

...Саня çĕр каç киле çитсенех Меркурие пырса çапăнчĕ.

— Амăшĕсем килĕшеççĕ,— терĕ вăл тӳрех.

— Кам? Мĕн килĕшет?— ăнланаймарĕ Саня.

— Ара, Сухвисен... Паянах çураçма каймалла... Халĕ кайни — хĕр пăхнă шутлă пулчĕ...

Саня пуçран çапнă пекех анраса кайрĕ.

— Эсĕ апла евчĕ пулса пынă?..

Саня тӳрех пӳрте вирхĕнсе кĕчĕ.

— Анне!— кăшкăрса ячĕ вăл тӳрех, унтан амăшĕ хăраса кайнине курса сасартăк шăпланчĕ.— Анне,— терĕ вăл лăпкăнрах.— Мĕн пулать ку?.. Эсĕ, анне, чăнласах çке... Мĕне кирлĕ пулчĕ-ха Меркурие ман хыççăн ярса хĕр калаçтарма? Эпĕ хам пултараймастăм-и? Хĕрĕпе килĕшсе сăмах татман-çке. Мĕнле-ха тӳрех?

Саня урӑх ним калама та пӗлмерӗ. Амӑшӗ чӗнмерӗ, кусне çеç тутӑр кӗтессипе шӑлса илчӗ. Паян тин ак хуллен сӑмах пусларӗ:

— Хӑвна лайӑх пултӑр тесе турӑм та çав. Йывӑра илсе кӑмӑла хусмалли ним те çукчӗ унта. Йали çапла ӗнтӗ ялта чӑвашсен пирӗн. Эсӗ кунта та хулари пек шутлатӑн пулӗ. Вӗреннӗ çынсем çапла ӗнтӗ вӗсем. Ку йӑлайӗркесенче турра, тӗшмӗше ӗненни, асамлӑ вӑйсене ыр туни пӗрре те çук, ывӑлӑм. Кил-йыш çирӗп пултӑр тесе çапла тӑваççӗ ӑна. Йӗрке туни пулать вӑл. Халӑх йӗркине туни. Ӗмӗртен çапла пырать. Пирӗн анчах мар — пӗтӗм тӗнчипех çапла. Ан тив, кӑшт урӑхларах пулсан та. Чӑваш хӗрне чӑваш йӗркипе çураçса туй тунӑшӑн кам мӗн калать сана? Начар-им пирӗн йӗрке? Пӗтӗм ял туя килет. Пӗтӗм ял кӑна мар, пӗтӗм таврари ялсенчен туй арӑмӗсем, туй ачисем, туй куракансем пухӑнаççӗ. Халӑх пухӑнать. Çамрӑк мӑшӑр халӑх умӗнче пысӑк парӑмра тӑтӑр, уйрӑлас-тӑвассине пуçа ан илтӗр тесе çапла тӑваççӗ ӑна, ачам. Уйрӑлса пӑх-ха — çав халӑх умне кайран пите кӗççе çӗлемесӗр епле курӑнӑн? Пур ав, хӑшӗ-пӗри ирӗкре авланать. Никам та курман-илтмен — пӑхӑсӑн: арлӑ-арӑмлӑ, тепӗр кунне — никам та курман илтмен,— уйрӑлнӑ хайхисем! Сухвие ӑна амӑшӗ те халӑх йӗркисӗр килтен кӑларса ямасть. Сухви хӑй те куншӑн пӗрре те аванмарланса именсе тӑмасть. Ашшӗ-амӑшӗ ирӗкӗнчен тухмасть вӑл. Хӗрне сахал пӗлетӗп тесе пӑшӑрханатӑн-и? Сирӗн, вӗреннӗ çынсен, хӗрпе темиçе çул калаçса туслӑ пулмалла та, пӗр-пӗрне йӑпатса, тарӑхтарса, çӗтӗлтерсе пӑхмалла та — тин авланмалла. Пурин те ун пек пулмасть-çке вӑл. Сана ют çынна вӑйпа илсе панӑ пек туйӑнать пулӗ? Хӗрне ху килӗштеретӗн-çке. Хӗрӗ те килӗштерет. Хӗрне пӗлетӗн. Эпир тата лайӑхрах пӗлетпӗр. Ачаранах пӗлетпӗр. Пирӗн пек пӗчӗк ялта кашни кӑмӑл-шухӑшне, ӑсне-пуçне ал çинчи пек куратӑн. Ун пек хӗр кашни утӑмрах тӗл пулмасть, ачам. Сайра ун пекки...

— Çапах та евчӗсемех кирлӗ марччӗ пуль, эпир хамӑрах калаçса таталаттӑмӑр.

Саня майӗпен амӑшӗ енне çаврӑнсах пычӗ.

— Ай-уй, ачам,— терӗ амӑшӗ.— Евчӗ вӑл ашшӗ-амӑшне çырлахтарма кирлӗ. Хӗрпе каччӑ хушшинчи хирӗçӗве татма. Хӑвӑр эсир те виçӗ çултан хирӗçсе вӗçне тухса пӗтетӗр, те килӗшейместӗр. Евчӗ пӗр кунтах татса парать, ачам. Халӑх йӗркине тумаллах пулӗ. Хӗрӗ ялти йӑлайӗркене курса, хисеплесе ӳснӗ. Куншӑн вӑл кӳренмест. Кӗçӗр кайса çураçса пӑрахмалла çеç...

Саня чӗнмерӗ.

— Ну мӗнле? Саня? Ҫаяр пулӗ?

Саня ура ҫине тӑрса кил хушшинелле пӑхрӗ.

Ҫил хушшинчи тулли лупашкасем ҫинче пӗчӗк тумламсем шапа пуҫӗнчи ҫурхах пек хӑмпӑсем сиктере-сиктере кӑларса ташларӗҫ. Пӗлӗт таткаланса саланчӗ. Ҫӳлте-ҫӳлте чӗкеҫсем ярӑнса вӗҫе пуҫларӗҫ. Аслӑк айӗнчен чӗпсем кӗпӗрленсе тухса йӗпе курӑк ҫийӗн асӑрханулӑн утрӗҫ. Уҫӑ кантӑк умӗнченех пӗр пыл хурчӗ нӑрласа иртрӗ...

Пур енчен те уяртса килчӗ.

6

Хӗвел анса тӗттӗмленсен Сухвисем патне тӑваттӑн — Саня, Саня амӑшӗ, Саня юлташӗ тата Меркури — пырса кӗчӗҫ.

Сухвисен ӗнтӗ ҫывӑрма та выртнӑ.

— Ҫӗртеҫҫӗ-и, ҫук-и?— терӗ Меркури тӗттӗмре алӑк сули ҫинче чарӑнса.

Сухви амӑшӗ хуллен кӑштӑртатса тӑчӗ.

— Ӑҫта каякан халӑх ку?— терӗ вӑл чӑннипех те тӗлӗнсе Меркури шӑрпӑк ҫутса янӑ хыҫҫӑн.

Вӑл хӗрлӗ ултӑллӑ та — пӗлмен алӑпа ҫӗленӗрен-ши — икӗ шӗвӗр хакне айккисене мар, мала-хыҫа хушнӑ йӗтӗн кӗпепе. Хул ҫине «кайӑк сиккипе» тӗрленӗ.

— Эсӗ хӑй ҫут-ха часрах... Курӑн ӳнта,— хушрӗ Меркури.— Мӗн эсир, чӑхсем пек, хӗвел анмасӑрах ҫывӑрма хӑпарса кайнӑ?

— Краҫҫынӗ те ҫук пуль-ха. Ҫӑҫал ҫулла ҫутман та. Труби те таҫта.

Карчӑк тур кӗтессинче чакаланчӗ, кайран таҫтан краҫҫын савӑчӗ йӑтса тухрӗ.

— Эпир хамӑрах пултараканччӗ-ха,— терӗ Меркури. Вӑл лампӑна краҫҫын ячӗ, кӗсйинчен чикарккӑ чӗркемелли хаҫат кӑларса лӳчӗркерӗ те вӑрӑммӑн хашлата-хашлата вӗрсе труба тасатма тапратрӗ.

Хӑнасем тӑрӑхла сак ҫине ларса тухрӗҫ.

— Ну, кинеми, йышӑн хӑнасене,— пуҫларӗ Меркури трубана майласа лартнӑ май.

— Ара, чӗннӗ хӑна ҫукчӗ те — тӗшмӗртеймерӗм-ха нимӗн те,— терӗ карчӑк.

Карчӑк ҫуталса кайнӑ пӳлӗмре сӗтел ҫине тухса ларнӑ ҫавра ҫӑкӑрпа чӑкӑта тата чӳхенсе йӑлтӑртатакан четвӗрт кӗленчине курах кайсан урай варринче тӑпах чарӑнса тӑчӗ те чакса-чакса пырса кӑмака сакки ҫине кайса ларчӗ.

— Ара, Сухвийĕ ăçтаччĕ-ши?— илтĕнчĕ тĕпелтен Сухви инкĕшĕн сасси.

— Хĕрсемпе таçта тухса кайрĕç вĕсем,— терĕ Сухви пиччĕшĕ пăлтăртан кĕрсе.

Меркури çак хушăра тек-текех хĕрпе каччă пирки сăмах вылятрĕ. Пуринчен ытла Саньăна ырласа калаçрĕ.

— Ҫаччи маттур,— терĕ вăл.— Асĕ пур, пуçĕ пур. Хĕре шурă пӳртре усрĕ. Пĕр сăмахпа каласан хăвăрах пĕлетĕр. Ют ялсем пулнă пулсан суйăттăмăр, хамăр ялсемех те — хăвăрах каламасăрах пĕлетĕр,— терĕ вăл çине-çинех.— Сухвин те мăшăр тупма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ.

Сухви амăшĕ çак хушăра ним чĕнмесĕр аллисене кăкăр çине хĕреслесе тытса ларчĕ.

— Тем...— терĕ вăл Меркури кăшт сывлăш çавăрма пек чарăнсан.— Халех парас теменччĕ... Çипуçĕ те çук та ачин... Çипуç умне тăратса çитереймерĕмĕр. Аппăшĕнпе çеç им курса пурăнчĕ. Хăй ятне нимех те туман. Тем, ĕç тухĕ-и ара? Ытла сарăмсăр пулать ку, выльăх сутса янă пек. Хуларах ун темĕн чухлĕ пулĕ... тен, арăмĕ те пулĕ, кам пĕлет унтине унăнне. Çавăн чухлĕ хитре майра сая кайнă чух ма манăн пĕртен-пĕр хĕре илес ун? Шупашкара та илсе çитермĕ... Ун валли вĕреннĕ çынсемех тем чухлĕ.— (Çак хушăра Сухви килсе кĕчĕ те тӳрех кăмака хыçне чăмрĕ.) Ҫарчăк хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ:— Вăл ман рехетсĕр пурнăç тутлăхĕпе ӳсрĕ те, тем, хула çыннипе, вĕреннĕ çынпа, пурăнма пĕлес çук. Тем, вĕсен пăрça пиçет-и ара иккĕшĕн? Пиçӳ-каçу, килĕшӳ-çыпăçу пулас çук вĕсен хушшинче.

— Ытлашши асăрханатăн пулĕ, кинеми,— терĕ евчĕ.

— И-и, ачам, халĕ шăши те туяпа çӳрет,— терĕ карчăк.

— Хăйсем пĕр-пĕрне килĕштерсен пирĕн ĕçĕ — хут купăс: туртать — калать, туртмасть — каламасть...

Сухви инкĕшĕ кăмака хыçне кĕрсе кайрĕ. Вăл пăшăлтатса тем каларĕ. Хĕр хирĕç тавăрса калани илтĕнмерĕ. Сухви çав-çавах пуçне кăмака çумне чиксе, питне аллисемпе хупласа тăчĕ.

— Ну, мĕнле, четвĕрт пуçлама юрать-и?— тет Меркури сывлăш çавăрса илме памасăр.

— Эп пĕлместĕп,— терĕ хĕр амăшĕ.— Мĕнле-ха капла? Хамăр тавранах парас тенĕччĕ. Хĕре таçта кайса пĕтериччен... Чăнах та, мĕнле-ха капла? Ыранах хулана тухса каймалла тетĕр. Туйсăр епле килтен кăларса ярасха хĕре?

— Эс кунтарах тух-ха, Сухви,— терĕ Меркури.— Ҫала, юрать-и четвĕрт пуçлама? Тухах ĕнтĕ, Сухви.

Сухви вӗлт турӗ те — ҫенӗкелле вирхӗнчӗ.

— Апла юрамасть-ха вӑл. Хӗрӗн йӗрки тӑрӑх кунта пулмалла.

— Нимех те мар. Хӗрӗн йӑли ҫапла. Акӑ каччи тухса илсе кӗрет. Ҫӑшт тухса калаҫкалаччӑр.

...Саня ҫак вӑхӑтра йӗп ҫинчи пек ларчӗ. Ал-урана ниҫта хума та, куҫсене пӗр вырӑнта чарса тӑратма та пултараймарӗ. Пуҫ кашларӗ, шавларӗ.

Вӑл карчӑк сӑмахӗсене те, Меркури сӑмахӗсене те илтмерӗ. «Тухмалла» тесен — вӑл хӑвӑрт ура ҫине тӑчӗ те пӳртрен тухрӗ.

Пӗр самант ун куҫӗ те ним палӑртмарӗ, пуҫ та ним шухӑшлама пултараймарӗ. Ун асӗнче ҫакӑн пек шухӑшсем ҫеҫ ҫаврӑнчӗҫ.

Мӗн тери ухмахла пулса тухрӗ! Мӗншӗн-ха малтан калаҫса килӗшмелле марччӗ? А халӗ? Хӗрпе те калаҫса татӑлман. Пырать-и вӑл, ҫук-и? Халӗ ӗнтӗ савман, килӗштермен хӗре евчӗсемпе ҫураҫ? Халӗ Саньӑн мӗскӗн янавар пек лар! Уншӑн ҫынсем калаҫаҫҫӗ! Ҫак пӗтӗмпех, пӗтӗмпех амӑшӗ пирки! Тухса каяс мар-и пӗрех хут?

Саня картлашка ҫинчен сикрӗ те пӗр самант чарӑнса тӑчӗ. Такам нӑшӑклатса хӳхлени илтӗнчӗ.

Крыльца карлӑкӗ ҫине пуҫне чиксе паҫӑртанпах Сухви тӑнӑ иккен. Саня ӑна икӗ-виҫӗ минут пуль асӑрхаман та.

— Сухви!

Каччӑ сылтӑм аллипе ерипен хӗр хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ. Хӗр хускалмарӗ те. Саня ӑна хулӗнчен тытса хӑй еннелле ҫаврӑнчӗ те хӑй ҫумнелле туртрӗ. Хӗр пӗр хусканупа та хирӗҫлемерӗ, сӑмах та чӗнмерӗ, питне икӗ аллипе хупласа пуҫне Саня кӑкри ҫине чикрӗ.

Саня ӑна тата хытӑрах хӑй ҫумне чӑмӑртарӗ. Унӑн пуҫне икӗ алпа икӗ питрен тытса ҫӗклеме хӑтланчӗ, анчах хӗр тата вӑйлӑрах тӗршӗнсе пуҫне каччӑн кӑкӑрӗнчен уйӑрмарӗ.

Пӳрт алӑкӗ шалтлатсан Сухви картах туртӑнса Саньӑран уйрӑлчӗ те тӳрленсе тӑчӗ.

— Атя... урамалла... Тухар,— терӗ Саня тытӑнчӑклӑн та аран-аран сывлӑш ҫаврӑнса. Хӗр ним сӑмахсӑрах картлашка ҫинчен анчӗ, хапха патнелле утрӗ. Вӗсем пӗве хӗрринелле сулӑнчӗҫ.

Чылайччен чӗнмерӗҫ.

— Сухви...

— Кай... ан тив...

Каччӑ хӗре икӗ алӑпах ҫупӑрласа хӑй ҫумне чӑмӑртарӗ.

Пěвери уйăх — чӳхеннě май — пěр çěре пуçтарăнчě, сарăлса кайса таткаланчě; акă ун çути йывăç тăрри витěр ӳкрě те вěтě хумсем шунă май шыв çинче ваклачнчě, ванчăкěсем, вуншар ылтăн пулă вылянă пек, пěрре чăмачăма тухрěç, тепре çиелтен ишсе çаврăнчěç.

Шыв пичě çине хěрпе каччă мěлки ӳкрě.

— Эсě чăнласах тытăннă иккен,— терě Сухви вăйсăррăн.— Ну, мěн тăватăн эсě, Саня, кала-ха?

Саня чěнмерě.

— Эпě куна пачах кěтменччě. Тěлěкре те тěлленмен. Тата евчěсемпех-çке. Çитменнине, эпир пěрне-пěри пěлместпěрпе пěрех-çке. Юрать-и вара çапла?

— Чăнах та... аванах мар ěнтě.. Мěн тăвас-ха çапла килсе тухрě те. Евчи — йěркишěн, ваттисен кăмăлне... эпě мар.

Саня хěре хăй çумне туртрě. Сухви турткалашмарě.

— Сухви,— терě Саня хыттăн.— Эпир ыранах хулана каятпăр. Ман юлташсем нумай, лайăх юлташсем. Малашне вěсем сан юлташусем пулěç. Вěсемпе нихçан та кичем мар. Вěсем сан хăнусем пулаççě. Сухви! Ну, мěн эсě чěнместěн? Тен, эсě çапла питě хăвăрт пулса иртнěшěн çилленетěн пулě? Эсě хирěç мар вěт, Сухви? Кала, çапла-и? Эпир телейлě пулăпăр.

Сухви чěнмерě.

Пěвере хурсем какăлтатрěç. Хыçра йăмра тăрри кашăлтатса илчě. Сасартăк... Çывăхрах хыттăн шартлатни каччăпа хěре картах сиктерчě.

Шыври сăрт мěлки çинче çывхарсах килекен арçын кӳлепи, вăрăм пушă сěтěрнěскер, курăнса кайрě.

— Çакăнта пушмак пăру курмарăр-и?— илтěнчě хурлă та асаплă сасă. Арçын мěлки фуфайкăпа, атăпа, çěлěкпе. Вăл каччăпа хěртен пěр-ик пушă вăрăмăшěнче чарăнса пачах вěсем çине мар, таçталла çырма урлă пăхрě.

— Кěтӳрен тарнă, мур,— терě вăл хěрпе каччă хирěç тавăрса каласса кěтсе илеймесěрех малалла утса.

— Кам вăл... ял çурать?— терě Саня.

— Кӳршě ял кěтӳçě,— терě Сухви шăппăн.— Эпě ăна кашни кунах куратăп. Вăл — Сурăм шывěн леш енчи улăхра, эпě — ку енче. Хăш чухне выльăхсем пěр-пěрин енне каçсан эпир пушăпа шартлаттарса сас парса илетпěр.

...Çак вăхăтра каллех туран пушă шартлатрě. Вăйлă сасă шăплăха çурса ярса пěрре туран, тепре анатран, унтан каллех туран илтěнчě те çырма тăрăх анса кайрě, Шěвěш çырминчен тепре шартлатрě, вара Сурăм леш енчи улăх сăртěнче асаплăн ахлатса вěçленчě.

Сухви темшĕн чĕтренсе илчĕ.

— Атя каяр,— терĕ вăл шиклĕ сасăпа.

Вĕсем чупнă пекех каялла утрĕç.

Пÿрте те васкаса кĕчĕç.

— Ну, Сухви, юрать-и четвĕрт пуçлама?..— Меркури урай варрине тухса Сухви çине тÿррĕн пăхрĕ. Хĕр алăк патĕнче пуçне усса шăппăн тăчĕ. Вăл «юрать» тени пĕтĕм ĕçе самантрах татса парать.

Хĕр сывлăш çавăрса илеймен пек йывăррăн сывларĕ. Вăл халь-халь мĕн те пулин каласса пурте сывлама чарăнса кĕтсе тăчĕç.

Пÿлĕмре пĕр хушă стена сехечĕ уксаххăн шаккани çеç илтĕнсе тăчĕ.

7

Сурăхсем шăрăхпа аптраса тапăра тăчĕç.

Кĕтÿçсем те шăрăхпа ĕнтĕркерĕç те, шăм-шакĕсем лĕнчĕрех кайрĕç.

Хĕвел питĕнчи улăх сăртĕнче терпекленсе ларакан çил лăснă пĕкрĕç йăмра та шăрăхпа импресе лÿпперрĕн кашларĕ. Уçă çил килсе çапсан унăн çулçисем канăçсăррăн талкăшма пуçларĕç. Вăхăтсăр саралнă çулçисем, суккăр кайăк пек, ÿпне-питне çаврăнкаласа çĕрелле татăла-татăла анчĕç.

Колхоз фермин сурăхĕсене виççĕн пăхаççĕ. Пĕри килте канать, иккĕн улăхра çÿреççĕ. Паян черет — Варвари инкепе Сухвин.

Сухви кĕтÿрен татăлса юлнă путеке çĕклесе Сурăм хĕррипе утрĕ. Хĕр час-часах чарăнкаласа тăчĕ, путеке çурăмĕнчен шăлса илчĕ. Вăл ăшăрханипе вăйран кайса кĕлесĕр аслă пушмакĕ хывăнса ÿкесрен урине сĕтĕререх, вăраххăн утрĕ. Тек-текех салтăнса каякан патис тутрине юсарĕ.

Ун çийĕнче çÿлте-çÿлте — ним куçман пекех тăракан пĕлĕтпе туртăннă тÿпе. Ун витĕр — кăвак тÿпене шултра куçлă марлĕпе карса хунă пек — çумăр хĕвелĕн пайăркисем ним чăрмавсăрах кĕреççĕ те çав тери пĕçертеççĕ. Хĕвел анăç енчен шур сурăхăн тин каснă сухăрлă сарă çămĕ пек пĕлĕт куписем йăваланаççĕ.

Улăх лапинче пурçăн мурккаллă ука çÿçине кăшт çеç вĕçтеркелесе кукуруза кăшăлтатать.

Сăртри парлакра çĕртме тăвакан трактор хура куракĕсемпе çуйхашса улăх сăрчĕ хĕррипе иртрĕ. Ун хыççăн касă тăршшĕпех хура кураксем акăнса юлчĕç.

Сухвие çак парлака сухалани кăшт пăшăрхантарать те. Миçе çул ĕнтĕ сурăх кĕтĕвĕ çӳретнĕ вĕсем кунта.

Сухвин ăш хыпрĕ. Чĕрене тем пăчăхтарать... Те шыв ĕçес килнĕрен çапла, те ахаль.

Сухви Оккай çырми еннелле пăхса илчĕ. Унта сивĕ-сивĕ çăл куç пур. Ун пек сивĕ çăл куç урăх ниçта та çук теççĕ. «Йывăр шыв» теççĕ ăна ялта.

Сухви çыран хĕррипе утрĕ.

Çыран кукринче аялта паян чарлан курăнмарĕ. Вăл кашни кунах çакăнта килкелекенччĕ. Шарласа юхакан шыв çинчи чул çине хăрах уран тăрать те ним хускалмасăр шывалла пăхать. Хутран-ситрен тем сăхса илсе çăтать: ахăртнех, пулă тытать пулас. Сухвирен хăрамасть вăл. Çывăхарах пырсан тин вăрăм утăмсемпе ерипен малалла чупса кайса хуллен сывлăша çĕкленет. Ăçта-ши вăл паян?

Шыв леш енчи чăнкă çыранта çĕр чĕкеçĕн йăви пур. Парлакра, çӳлте, пĕчĕкçеç уртăш йывăççи кутĕнче путене йăви пур. Ăна трактор сухаласа пăрахрĕ пулĕ.

Çак улăх ирхине ирех хĕвел тухнă чух килсен ĕнчĕ пĕрчисем сапса тухнă пек йăлтăртатать.

...Кăкăрта темшĕн, тем шыçса хăпарнă пек, тан тапнă пек тапса, ыратса килчĕ.

Мĕншĕн-ха паян ăна кунта çук япаласем шута яраççĕ? Мĕн пирки пăшăрханмалла-ха?

Тăван тавралăх... Çакăнтан ĕнтĕ унăн уйрăлса каймалла. Çак улăхран, çак Сурăм шывĕнчен, Варвари инкерен, çак путекрен...

Улăх сывлăмĕ ĕнчĕ пĕрчи пек йăлтăртатнине те кураймĕ вăл кунта тек... Чарлан хăрах уран тăнине те, текерлĕк хурлăн кăшкăрашса йăвине шыранине те...

«Эх, Саня, Саня!..

Эсĕ ĕнтĕ хулана илсе каясшăн. Мĕн тăвăп эпĕ унта? Сурăх кĕтĕвĕ çук-çке-ха унта?»

Сухви путеке хăй çумнех пăчăртарĕ те тутинченех чуп туса илчĕ, çыран хĕррине ларчĕ. Çырма леш енчен çирĕк хуппинчен тунă какăр сасси илтĕнчĕ. Кăçма юрлать. Ăна та кичемрех пулĕ...

«Эх, Саня!.. Санпа телейлех пулăп-ши?»

Сухви каллех иртнĕ мăскаллă куна, манăçми каçа, пан улмине аса илчĕ...

Çав улмуççие Сухви вăрăранах пăхса ӳстерчĕ, унăн малтанхи улмине вăл хăйĕн чун савнине çитерме сăмах парса хунă. Кăçал çав улмуççи малтанхи хут икĕ улма турĕ. Эх, Саня!.. Вăл ăна кам ӳстернине те, мĕнле улма

иккенне те пĕлмерĕ, ыйтмарĕ те. Ҫилпе килнĕ темĕнле кĕвĕ илтĕнсен вара тӳрех: «Ҫам хывнă?» — тесе ыйтрĕ.

Саня, Саня!..

Сухвие Варвари инке сасси тăна кĕртрĕ.

— Мĕн айланан ара ҫав усал путекпе. Апата килсем! — илтĕнчĕ йăмра айĕнчен.

Сухви Варвари инке ҫумне ларчĕ, чĕркуҫҫисене кĕпе аркипе туртса витрĕ.

— Ҫук, ҫиес килмест, Варвари инке.

— Эсĕ хăвна ҫураҫнăранпа тем ҫими пултăн-ха, хĕрĕм, — терĕ Варвари инке. — Ҫаймаллипех каятăн-и ĕнтĕ? Туйĕ хăҫан ара?

Сухви пĕр хушă пуҫне чиксе ларчĕ.

— Виҫмине, — тавăрчĕ вăл шăппăн.

— Э-э, апла Сурăм пуххи кунхине? Чалпаш сурăхлăх — хăвах сурăх пăхса ӳстертĕн ĕнтĕ. Хăвна килĕшнине пăхса хур-ха эппин...

Сухви чĕнмерĕ. Ал айне ҫакланнă тăпăрчă чăмакки пек сыр кăмпине йăваласа ватрĕ.

Вăл сасартăк Варвари инкене пилĕкрен ыталаса илчĕ.

— Уйрăлас килмест ман ҫак ҫĕртен-шывран! Ҫĕтӳрен!..

Вĕсем пĕр ăстрăм хускалмасăр ларчĕҫ.

— Варвари инке, кала-ха, — терĕ Сухви. — Эсĕ юратнă-и кама та пулин? Телейлĕ пулнă-и эсĕ?

Ҫарчăк малтанах ним калама аптраса ларчĕ.

— Ҫам юратман пулĕ ҫамрăк чух, — терĕ вăл юлашкинчен. — Анчах пирĕн юмахри пек юрату пулман ҫав. Сайра вăл, хĕрĕм. Пирĕн кулленхи ахаль юрату ҫеҫ пулнă. Ҫун пек чух телее савăшура мар, урăххинче тупатăн: кил-ҫурт тирпейĕнче, ача-пăчара, ĕҫре...

Варвари инке Сухвирен уйрăлчĕ те саппун аркине ая ҫавăрса хурса тĕмеске ҫине ларчĕ.

— Телей пирки эп сана, хĕрĕм, пĕр юмах ярса парам... — терĕ вăл. — Ҫу вăл ĕлĕкех пулнă... Хуняшшĕ кинне — ҫĕн ҫынна — улăха ут тытма ярать.

«Ас ту, аякран сас туса пыр. Патне ҫитсен — сăмах ан чĕн, вара пĕтеретĕн», — тет хуняшшĕ.

Ҫинĕ улăха лаша тытма тухса каять. Лаши кӳрăк ҫинче выртнă. Ҫĕн ҫын лаша тăрса тарасран хăраса, «кайран тытаймăп» тесе ним сас тумасăрах пырать. Ҫитет те чĕлпĕртен туртать. Лаша тăмасть, каллех туртать — тăмасть. Вара ҫĕн ҫын:

«Ну-у, тăрсам!» — тесе ярать.

Пăхать: лаша ҫавăнтах тӳнсе каять. Тытса пăхать

те — лаша вилнĕ... Вăл лаша çунатлă пулнă иккен. Çĕн çын ун çунатти çине пуснă пулнă...

Варвари инке пĕр кана чĕнмесĕр ларчĕ те тутăр вĕçĕпе куç кĕтессине шăлса илчĕ.

— Телейĕ ĕнтĕ ман,— терĕ малалла Варвари инке.— Çав юмахри пек пулчĕ пулмалла... Çав телей çунатти çине таптарăм пулмалла... Упăшкам пысăк çынччĕ. Авлансанах мана хулана илсе кайрĕ. Апат пĕçереттĕм, кĕпе çăваттăм. Урăх ĕç çукчĕ ман валли. Ун патне хăй пек çынсем — юлташĕсем — пыратчĕç. Артистсем çинчен, кĕнекесем çинчен калаçатчĕç. Эпĕ вĕсем калаçнине чĕптĕм те ăнланмастăп. Лайăх пурăнтăмăр савăш уйăхне. Пĕрре упăшка юлташĕсем хам пирки калаçнине илтрĕм. «Çакăн пек лайăх çынсене яланах усал арăм çакланать. Мĕн тума илнĕ вăл ухмаха?»— терĕ пĕри. Çакăн хыççăн ман чĕре шар çурăлсах кайрĕ. Пăрахрăм та тухса тартăм. Акă ĕнтĕ халь çирĕм çул ытла хăраххăн пурăнатăп. Малтанах ялта мана илес текенсем те нумайччĕ те — кайран качча кайса килнĕ хĕрарăма кам пăхтăр? Унтанпах сурăх кĕтетĕп. Çапла вăл, хĕрĕм, телей тени. Телей çунатти çине пусма юрамасть. Сас туса пымалла. Эсĕ, хĕрĕм, ман пурнăçа чĕре патне ан хур, юмахне ăша ил.

Сухви сăн-пичĕ темшĕн асаплăн туртăнкаласа илчĕ. Вăл юмахăн тупсăмне ăнланса илеймесĕр асапланса ларнăн туйăнчĕ.

Самантран ăна каллех пушă сасси шарт сиктерчĕ. Çырма леш енчен виçĕ хутчен пушăпа шартлаттарчĕç — ку вăл кӳршĕ ял кĕтĕвне Сухвисен сурăхĕсем каçнине пĕлтерчĕ. Сухви ура çине сиксе тăчĕ те пушăпа сулса хурав пачĕ, вара чупсах шыв урлă Кçма кĕтӳç патнелле чупрĕ.

8

Хĕвел хĕртсе пăхать.

Çака çулçисенчен пыл юхса ларать. Вĕсем йăлтăртатса çеç тăраççĕ. Вĕсен айĕпе иртсе пынă чухне пуç çине çулçă пылĕн тумламĕ татăлса анать.

Юмахри пек сарă кун тăрать.

Çакна май çын чун-чĕрине те çутă-çутă хаваслă туйăм ӳксе çутатать.

Паян кăнтăрла тĕлнелле Сурăм таврашĕнчи тĕрлĕ çулсем тăрăх шап-шурă халăх, капăр халăх, Чăваш Сурăмĕ еннелле куçа пуçларĕ. Часах темĕнле чăрмав-сăлтавпа

каярах тăрса юлнисем çеç пĕччен-иккĕн питĕ васкаса утрĕç.

Шăп та шай кăнтăрла иртни виçĕ сехетре Куканар вăрманĕ пуçĕнче автобус чарăнчĕ те — çул çине Саня анса тăчĕ.

Вăл питĕ васкарĕ пулин те Куканар вăрманĕ хĕрринчи çулпа хăй сисмесĕрех ерипен утрĕ. Ĕнтĕркенĕ йывăçсен сулхăнĕ айĕнчи симĕс курăк пусса илнĕ урапа çулĕ, кăшт нӳрĕ те пиçĕскер, урасене аялтан резина пек таптарса пычĕ.

Çакă сарă кун, вăрман, уй хир уçлăхĕ, хаваслантарса та çĕклентерсе, кирек кама та — ял çыннине — ачалăхри ырă тĕлĕке аса илтерет.

Кăçăхтарсах, аташтарсах, ĕнтĕркеттерсех яракан илемлĕх!

Хулари тĕтĕмлĕ, тусанлă сывлăш хыççăн çакăн пек илĕртекен вырăнпа — тăван кĕтеспе — утма мĕн тери аван!.. Уйрăмах тата тăван ялта, тăван килте кĕтекен пулсан! Кунсăр пуçне, савнă хĕр, сăмах татнă хĕр пулсан!

Кăкăра та, пит-куçа та, юрра та, çак уй-хире кăна мар — тĕнчене шăнăçайми телей те пулать!

Çакă вăл паян пулмалла.

Паян!

Хĕр «ĕçне» паяна хăварчĕ.

Саня нихçан та паянхи пек телейлĕ пулман пулĕ. Çук, паянхи пек мар — çак юлашки эрнери пек! Сухви пĕр самантлăха та куç умĕнчен каймарĕ.

Сухви!.. Сухви!..

Саня пĕлет. Телей валли хăй кăна телейлĕ пулни çитмест-ха, Сухви те телейлĕ пултăр. Сухви те хулара телей туптăр тесен ăна кирек те ăçта — завода-и, стройкăна-и — ĕçе вырнаçтармалла е вĕрентмелле. Вăл сахал вĕреннĕ-çке. Вĕренсен вăл Санькăшăн кăна мар, нумай-нумай çыншăн пархатарлă, хаклă çын пулать. Саня пĕлет, Сухви унсăр Саньăпа телей тупаймĕ. Ытах апла май килмесен Саня ăна ялтан та илсе каймĕ — ан тив, колхозрах пурăнтăр сурăх кĕтĕвĕ кĕтсе... Хисеплĕ ĕç... Çук, Саня хăй халĕ ниепле те яла юлаймасть. Вăл хулара ĕçлет-çке. Мĕнле-ха апла иккĕн икĕ çĕрте пурăнсан?

Саня чăматанне çăмăллăн вылятса пычĕ.

...Амăшĕ туя хатĕрленсе çитни çинчен ĕнер çын урлă пĕлтернĕччĕ. Сухвисен те хатĕрленеççĕ иккен. Сухвие туй

парнисем хатĕрлеме пĕтĕм хĕр-тантăшĕсем пулăшаççĕ-мĕн.

Саня юрласа ячĕ:

Аш çунать хыпса телейшĕн,—
Анлансам, туйсам...
Пулас çук телейлĕ эпĕ
Сансăр нихăçан.

Уçă сасса вăрман шала йышăнмарĕ. Юрă йывăççен лутра вуллисенчен çĕреллех ăмăрса тăракан çулçăсене çапăнса вăрман хĕррипе шуса каять те вăрман кукринчен каялла таврăнса Санькăна хăйнех илтĕнет. Унпа пĕрле вăрман юрлать. Вăл Саня юрринех, анчах сăмахĕсене пĕлменнипе кăшт каярах юлса юрланăн туйăнать... Юрă вăрман хĕрринчен сылтăмри пăрçа ани çинелле юхса саланать.

Пăрçа хутаççисем тĕл-тĕл тытăннă, тулнă, çав хушăрах хуртпуççи евĕрлĕ хĕрлĕ, шурă, кĕрен çеçкисем те курăнкалаççĕ.

Чĕрере ытарма çук ырлăх капланăвĕпе пĕрле темĕнле кăшт хурлăхрах, пăшăрханулларах савăнăç, амаланса пырса, çан-çурăма лăштăрах ярать... Çак çул айккинчи киленчĕклĕ сулхăнĕпе илĕртекен тӳшек пек çемçе пăрçа ани çине тăсăлса выртса юпах тиха пек йăваланас килет.

Акă тăван йĕтем, арман... ял...

Авăк çил çанăсенчен, кăкăр умĕнчен вирхĕнсе кĕрсе кĕпене çурăм çинче кутамкка пек вĕрсе карăнтарчĕ. Тапхăр-тапхăр, такам вĕрин сывланă пек, пăчă сывлăш сулăмĕ ирте-ирте кайрĕ.

Саня каллех юрă тăсса ячĕ:

Пулас çук телейлĕ эпĕ
Сансăр нихăçан...

* * *

Саня хăйĕн чи юратнă чăваш тĕрриллĕ кĕпине, лайăх якатнă шурă шăлавар тăхăнчĕ.

— Нумаях ан çӳрĕр,— терĕ амăшĕ.— Халăх пухăран таврăннă çĕре хĕрĕ патне кайăпăр. Меркури ирех тăрантас шырама кайрĕ-ха, Айгир ăйăра паян никама та тытма хушман.

— Тăрантасĕ те кирлех-ши?

— Эй, ачам, хĕре епле çуран илсе каçан? Халăх шутлах пултăр ĕнтĕ. Пĕтĕм ял хатĕрленет-çке. Шатах сăра турĕç-ха.

Саня тухса кайма тапрансан амăшĕ ăна сăмса тутри тыттарчĕ.

— Ну, кайса çÿре-ха эппин,— терĕ вăл ывăлне пухха ăсатса.— Атту саланма та пуçлĕç тата. Сухвийĕ хăй паçăрах кайрĕ-ха хĕрсемпе. Эсир нумай ан çÿрĕр. Премĕк илсе пар, кăруççел çаврăнăр. Хĕрсем юратаççĕ ун пеккисене.

Урамра пĕр çын чунĕ те курăнмарĕ.

Кĕтÿ те паян кăнтăрлачченех яла кĕнĕ. Ăçта килчĕ унта: пÿрт çумĕнче, йывăç сулхăнĕсенче — сурăх, качака, ĕне хутăшах выртаççĕ.

Укăлчари картасем урлă çĕнĕ ратлă шур автанăн сарлака та пĕрчĕмлĕ-пĕрчĕмлĕ пысăк киккирикĕ пек чăх çырли сапакисем усăнаççĕ.

Саня ял вĕçĕнчи укăлча алăкĕ витĕр тухрĕ те васкасах улăхпа Чăваш Сурăмнелле утрĕ.

* * *

Сурăм пуххи нихçан та çумăрсăр иртмен пулĕ. Анчах малтанах çумăр çукчĕ-ха. Çанталăк та йĕркеллехчĕ. Кайран вара сасартăк çумăр йăтăнса анчĕ. Унтан сасартăк... чĕрене шар çурса яракан кĕтмен сехмет пуç çине анчĕ. Анчах ку кайрантарах пулчĕ-ха.

Саня Чăваш Сурăмнелле çитнĕ çĕре пĕлĕт хĕрри çеç йăсăрланатчĕ. Вăл пухха çитнĕ çĕре ĕнтĕ унта ниçта утматăма та вырăн çукчĕ. Хĕрсемпе каччăсем ĕнтĕ виçшерĕн, тăватшарăн, пилĕкшерĕн çума-çум тăрса умлăн-хыçлăн утма тытăннăччĕ. Утакансем пухă вырăнĕ таврра çаврăнса илсе ял урамĕ тăршшĕпех каяççĕ, уя та тухаççĕ. Ÿссеÿссе пырса темиçе çухрăма тăсăлакан çамрăксен карти пĕр шухăш-кăмăлпа пĕр вăйă выляса утса çаврăннăн туйăнать.

Вирьял хĕрĕсем пухăсене шап-шурă тумланса тухаççĕ, пурте пекех ярăнса утаççĕ. Тата... ăçта, хăш халăхăн пурши вирьялсем пек илемлĕн алă сулласа утакан?

Саня пухха çитсе кĕнĕ-кĕменех хăйĕн хулари икĕ юлташне — çамрăк юрăççене — тĕл пулчĕ. Унтан вĕсем утса çаврăнакан хĕрсен картинчи икĕ хĕр хушшинче пыракан Сухвие тĕл пулчĕç. Вара улттăн юнашар тăрса утма тытăнчĕç.

Сухви шурă пÿс кĕпе тăхăннă. Вĕтĕ пĕрмечеллĕ саппун çакнă, калакĕ çине чечек тирнĕ; вăрăм çÿçеллĕ çĕрçĕн тутăр хыçалалла çавăрса çыхнă, ун çинчи тĕррисем тăкăнас пек.

Хĕрсем хĕвел çаврăнăш шĕкĕлчесе чĕнмесĕрех пычĕç.

Саня юлташӗсем ытларах искусство ҫинчен калаҫрӗҫ. Артистсен, кӗнекесен ячӗсене асӑнчӗҫ. Хӗрсене те калаҫтарма пӑхрӗҫ. Саньӑн пӗр юлташӗ тӗрлӗ ыйтусемпе тектекех Сухвие тапӑнчӗ: «Пӗлетӗн-и», «вуланӑ-и?» Сухви пуҫӗпе ҫеҫ хирӗҫлесе сулать. Саня та унпа яшсем умӗнче нимӗнле сӑмах та пуҫармарӗ. Саня юлташӗ пӗр ҫаврӑм утса тухсан сасартӑк Саня енне ҫаврӑнчӗ:

— Профан камне пӗлетӗн-и эсӗ, Саня,— терӗ вӑл.— Эсӗ ӑна начар ҫын тетӗн пулӗ, е? Вӑл калама ҫук пысӑк ҫын пулнӑ...

Тепӗр ҫаврӑм утса ҫаврӑннӑ ҫӗре Саня аяккалла пӑхрӗ те икӗ хӗр хушшинче Сухвие курмарӗ. Вӑл хӑҫан хӑш тӗлте пӑрӑнса юлнине те Саня асӑрхаман.

Саня чылайччен пухӑ тӑрӑх Сухвие шыраса ҫӳрерӗ. Грузовиксем ҫинчи лавккасем умӗнче те, хӗвел ҫаврӑнӑш, мӑйӑр, ҫырла сутса ларакан хӗрарӑмсем умӗн те иртрӗ, хӑю, тутӑр, тӗрӗ ҫиппи сутакан лавккасем умӗнче тӗркӗшекен хӗрсем хушшине те кӗрсе пӑхрӗ — Сухви ниҫта та курӑнмарӗ. Ҫак вӑхӑтра кашни Сурӑм пуххинчех ҫӑвакан ҫумӑр йӑтӑнса анчӗ. Пухӑ халӑхӗ кӗпӗрленсе ҫуртсем, лавккасем ҫумне хӳтте тара пуҫларӗ. Хула хӗрӗсем пушмакӗсене хывса ҫарран чупрӗҫ. Часах пухӑ вырӑнӗнче ҫумӑртан хӳтӗленме пӗр пушӑ кӗтес те юлмарӗ.

Саня ҫывӑхри лавкка кӗлечӗн картлашки ҫине хӑпарса тӑчӗ.

Кӗлет хӗрринчен сӑрхӑнакан кантра пек шыв юххи урасем ҫине сирпӗнсе хӗрсене тата шаларах хӑваларӗ. Ҫӳхе тум витӗр пӗҫертсе тӑракан вӗри ӳтсем хӗстерсех пынипе Саньӑна пӑчӑ пулса кайрӗ, вӑл вара хӗрринерех тухса тӑчӗ.

Ҫумӑр вӑраха пымарӗ. Кӗҫех кӗлет ҫумӗнчи ҫамрӑксем Сурӑм ҫийӗнчен юлашки пӗлӗт хӳри шуса иртессе ҫеҫ кӗтрӗҫ. Витӗр курӑнакан хӗрлӗ, кӑвак плащлӑ хӗрсем ӗнтӗ уткалама та тытӑнчӗҫ.

Саня та ҫӗре анасшӑнччӗ ҫеҫ — кӗлет умнех пӗр тӑрантас пырса тӑчӗ. Чӗркуҫҫи таран шур чӑлха тӑхӑннӑ пек шурӑ сакӑл уралла тимӗр кӑвак ӑйӑрӑн утнӑ чухне те сули кӑмп-кӑмп! тутарса пырать.

Тӑрантас ҫинчен виҫӗ кӗреш ҫамрӑк анса тем канашла пуҫларӗҫ, тек-текех хӗрсем ҫинелле пӑхкаласа илчӗҫ, ямшӑкӗпе пӑшӑлтатрӗҫ. Ямшӑкӗ вара, ҫӗре аннӑскер, каллех ларкӑч ҫине хӑпарса ларса тилхепине кӗҫ-вӗҫ хускалса кайма хатӗр тытрӗ.

Саня умӗнчи хӗр темшӗн чӗтресе илчӗ те каялла чакса Саньӑна та сулӑнтарса ячӗ.

— Сухви!..— тĕлĕнсех кайрĕ Саня ăна кĕтмен çĕртен тĕл пулнипе.

Сухви Саня çине кăн-н! пăхрĕ. Унăн пит-куçĕ, ахаль те салху сăнлăскер, тин кăна чунтан татăлса макăрнă хыççăнхи пек хурлăхлăн курăнчĕ; вăл пĕчĕк ачан халех иртекен таса тарăхăвĕпе хыпнă тейĕн. Куçĕсем шывланса йăлтăртатрĕç. Пит çăмартисем çинче — те çумăр тумламĕсем, те куççуль — икĕ тумлам чĕтрет... Тути хĕррисем кăшт кăвакарнă.

...Сасартăк Сухви такам алран тытса вăйлăн туртнипе сулăнса кайрĕ те майсăррăн картлашка çинчен сикрĕ. Ăна ӳкме памарĕç. Хĕре тепĕр çамрăк пилĕкрен ярса илчĕ. Сасартăк хĕр çӳлелле çĕкленчĕ. Икĕ çамрăк ăна тăрантас çине пăрахрĕç. Хĕр кĕскен те çинçен «ай» тесе кăшкăрса ячĕ. Çак вăхăтра кĕлет хыçне халăх кĕпĕрленсе килчĕ. Аçтан килчĕ унтан: «Хĕр вăрлаççĕ!», «Хĕр вăрлаççĕ!»— тесе кăшкăрни илтĕнчĕ. Тăрантас тӳрех карт! хускалчĕ те сирĕлсе тăнă халăх хушшипе ыткăнчĕ...

Саня вăйлăн сулăнса картлашка çинчен сикрĕ. Такам ураран ӳкрĕ, тахăшĕ вăрçса илчĕ, пите тахăшĕн пуçĕ пырса çапăнчĕ. Саня мĕн пур вăйне пухса талпăнчĕ. Акă ĕнтĕ çывăхрах тăрантас кустăрми айĕнчен сирпĕнекен пылчăк чăмăрккисем вăркăнаççĕ. Акă вĕсем питрен те çапăнаççĕ.

Тăрантас кустăрми хула сĕртĕнсе шăйăрса илчĕ, анчах Саня куна туймарĕ. Алла хура костюм çухи кĕрсе кайрĕ. Тем çатăртатрĕ, лăчăртатрĕ... Саня сулăнса кайрĕ, анчах аллине вĕçертмерĕ. Унăн пуçĕ урлă пысăк, йывăр кĕлетке ывтăнса кайса пылчăк çине лаплатрĕ. Вĕсем иккĕшĕ те харăсах сиксе тăчĕç.

Кайран вĕсене халăх хупăрласа илчĕ. Такамсем хыçалтан тытса аласене пăрса лартрĕç...

«Санăн ĕç çук!.. Хĕрĕпе сăмах татнă»,— тенине çеç лайăх илтсе юлчĕ Саня.

Тăрантас ĕнтĕ ялтан тухса уйпа ĕрĕхтерчĕ.

Саня кĕпи-шăлаварĕ тăрăх пылчăк юхрĕ. Вăл хăйне курма пырса тулнă ушкăн варринче тăрса йывăррăн сывларĕ, катăлса каяслах шăлĕсене çыртрĕ...

9

...Унтан вара, Саньăшăн мĕн пулса иртнине палăртнă пекех, каçченех çивĕ çумăр çурĕ.

Çумăр тумламĕсем кантăк тĕлĕнче пӳрт хĕрринчен татăлса анса пусма вĕçнеллех вĕçе-вĕçе кайса ӳкрĕç, стенана çапăнчĕç, чул çине ӳксе саланчĕç. Амăшĕ вучах

чĕртсен тĕтĕме мăрьерен ҫил ҫапа-ҫапа каялла пӳрте хăваларĕ.

Шултăркана кантăк, ун ҫине такам пĕтĕм кӳлепипе тӳне-тӳне кайнă пек, пĕрре тулалла, тепре шалалла шалтлата-шалтлата илчĕ, кайран тин шăршăнса ларчĕ те шалтлатма пăрахрĕ.

Тепĕр кунне ирхине такамшăн кăвак хуппи уҫалнă пек илемлĕ ир килчĕ. Типсе кайнă ҫĕр шӳнĕ те, пĕтĕм уй-хир, ҫĕр улми анисем, ҫерем — вирт кайнă пек е тата мунчаран тин тухнă ҫын типшĕнсе ларнă пек пăсланса йăсăрланчĕҫ. Ҫил вĕсене вĕҫĕмсĕр ҫĕр ҫумĕпе хăваларĕ.

Курăк ҫинчи ҫумăр тумламĕсем хĕвел ҫутинче пинпин лампочка ҫуннă пек йăлтăртатрĕҫ.

Амăшĕпе ывăлĕ иртнĕ сехметлĕ ĕҫ пирки пĕр-пĕрине ӳпкелесе те, ӳкĕнсе те кунĕпех ҫăвар уҫмарĕҫ.

...Кăнтăрла иртсен ялта туй юррисем, параппан-шăнкăрав сассисем илтĕне пуҫларĕҫ.

Ой, кĕрӳ Куҫма пур,
Инке лайăх Сухви пур...—

илтĕнчĕ юрă аякранах. Пĕтĕм таврана саланчĕ. Кайран таҫтан, улăхран, темĕн чухлĕ халăх хупă ҫăварпа ним сăмахсăр хурлă-хурлă юрă юрланă пек туйăнса тăчĕ. Куна никам та юрламарĕ. Чĕрере ҫеҫ ҫапла пĕтĕм тавралăх хурланнăн туйăнчĕ.

Саня урама тухса та курмарĕ, кантăк умне те пымарĕ. Чăматанне йăтса пахча витĕрех хулана кайма тухрĕ.

Пахчара хуҫălса аннă ҫĕмĕрт патĕнче пĕр хушă чарăнса тăмасăр пултараймарĕ-пултараймарех... Ҫĕмĕрт туратти ҫине такам таптанă та, хуп-хура пиҫнĕ ҫĕмĕрт сапакисем нимĕрленсе тăраççĕ, карта ҫумĕнчи шилĕк тума тесе каснă хурăн тункати хĕрлĕ лăймакапа елтĕрсе ларать, ун тавра пĕр симĕс шăна арăш-пирĕш ҫаврăнать. Ҫӳлтен — те хурăн тăрринчен — пĕр тумлам патлатса ӳкрĕ те ҫăкан ҫемҫе ҫулҫине шăтарсах пăрахрĕ. Малтиварта пĕр кайăк хӳхлесе юрларĕ. Ял ĕҫкĕре янкăшать.

Темĕнле хăлхана хупласан та, урамри юрă илтĕнчĕ-илтĕнчех:

Каччи пурччĕ кĕреш пек —
Ҫич ҫул хыҫҫăн ҫӳрерĕ.
Пирĕн Сухви инкерен
Виҫ ăш сăмах илтмерĕ.
Ой, кĕрӳ Куҫма пур —
Шет маттур мар, сатур мар:
Виҫĕ сăмах хушмарĕ —
Ытам тулли хĕр тупрĕ...

...Саня ял çумӗнчи çул çине тухрӗ. Кушӑхнӑ çулпа пӗр пушӑ урапа халтӑртаттарса, хӑй хыççӑн тӑсӑлакан тусан хӳрине пӑрçа ани тӑрӑх сӗтӗрсе иртрӗ. Ун хыççӑн пӗр пӗчӗк çавра çил пӗр хушӑ çул тӑрӑх пычӗ-пычӗ те ансӑр вар хушшинелле пӑрӑнса юлчӗ.

Чӗрене çурса, асаплантарса хыçра, аякра параппан тӳнклетрӗ.

10

Август вӗçӗ. Улма праçникӗ иртнӗ ӗнтӗ. Шыв сивӗне пуçланӑ.

Çилпе кӗрхи калча лӑпчӑна-лӑпчӑна илет. Вӑл хум ярсах хумханаймасть-ха. Пӗтӗм уçӑм пӗр енчен пӑхсан — хӗрхӗлтӗм тӗслӗ, тепӗр енчен пӑхсан — çутӑрах симӗс курӑнать.

Улӑх çыранӗпе темиçе утма çул, тӗллӗ-тӗллӗн пӗрпӗрин çине кӗрсе кайса — виçӗ сукмака пӗрлешсе, тӗл-тӗл уйӑрӑлса — тӑхӑр сукмака çитсе, çума-çумӑн тӑсӑлаççӗ.

Саня ак каллех — виçӗ çул иртнӗ хыççӑн — тӑван улӑх лапипе Сурӑм шывӗ еннелле утать.

Сылтӑмра улӑп тӑпри пек çӗкленсе тӑракан сӑрт, тӳпем. Çак тӳпемри курӑк та типсе çунса кайнӑ. Вӑл тӗлтӗл çеç карталанса ӳснӗ çерем кӑмпин çулӗ çинче тӗксӗм симӗссӗн курӑнса выртать. Хӑш-пӗр картисем çинче типсе пӗтӗрӗннӗ кӑмписем те курӑнкалаççӗ.

Хӑнкӑрма пек чӑмӑр та типсе хӑмӑрланнӑ сыр кӑмписем, хулӑн хупӑллӑскерсем, шӑп тӑрринчен шӑтнӑ та, çав шӑтӑкран çил вӗрнӗ май, мӑрьерен кӑшт çеç йӑсӑрланакан сӗрӗмлӗ тӗтӗм пек, хӑмӑр тусан вӗçет.

Çак тӳпем Саньӑна асамлӑ сӑрт пек туйӑнать. Халиччен никам та ӳкерсе паман, чуна хурлӑн-эрлӗн хумхантаракан аваллӑх илемӗ пытанса тӑнӑ пек çакӑнта. Çавӑ халь чунра хурлӑ туйӑм вӑратать. Ку вӑл аваллӑхпа çыхӑннӑ, анчах халӗ пӗтнӗ илем-мӗн. Çавӑ ӗнтӗ хурлӑ туйӑм вӑратать чӗрере. Ку сӑрт çине пӑхсан Сурӑм тӑрӑхӗнче пулса иртнӗ хурлӑхлӑ ӗçсем чуна хускатаççӗ.

Çакӑнта пӑхсан теме сирме, теме тепӗр майлӑ çавӑрса хума хистекен туйӑм çӗкленет. Çак тавралӑха хаваслӑх, савӑнӑç сӑнӗ кӳрес килет.

Саньӑн хӗç-пӑшалӗ — туйӑмсем. Сасӑсемпе, кӗвӗ-çемӗпе уçса панӑ туйӑмсем, юрӑсем. Çакӑнта хурлӑрах туйӑма тытса илсе çын куçӗ умне кӑларса тӑратнипе çеç ӑна улӑштарма, çӗнетме, чӗнме пултарать вӑл.

Нумай пулать-и-ха Саня кунта хӗр çураçма хатӗр-

ленни?.. Саньăна çакăнти авалтан юлнă шухăш-кăмăлăн, йăла-йĕркен юлашкисем — çакăнти хурлăх кĕвви — хур кăтартмарĕ-и-ха?

Çавăнпа пулĕ Саня кунта виçĕ çул килме пултараймарĕ. Чĕрене тата касăлтарасран хăрарĕ-и?.. Е вăл халь çав сурăх кĕтĕвĕ патĕнче тусан ăшĕнче чаваланакан пĕчĕк ачаран та хărать?

...Çут хуçса ларакан ача ют çын хăй патнелле çывхарнине курсан йĕрсе ячĕ.

— Анне,— нăйкăшрĕ вăл куçĕсене çаннипе хупласа. Ача патне вăрăм пушă сĕтĕрсе туртăннă питлĕ, типшĕмрех çамрăк хĕрарăм чупса пычĕ. Вăл кăвакарса ларнă пир кĕпепе, кĕпи çурăмĕ çинчи аçлăк тĕлĕнче çеç тар çапманнипе шап-шурă. Урине вăл хура çăм туна тăлипе чĕркесе пĕчĕк пуçлă, урлавлă çăпата сырнă. Юхса пĕтнĕ çивĕт иккĕрен пĕррене тăрса юлнă.

— Ма макăратăн, Миккуль?— ыйтрĕ хĕрарăм Саня çине тĕлĕннĕ пек пăхса илнĕ хыççăн.— Ан макăр... Ҫам тивет сана?— терĕ вăл малалла ача патне пĕшкĕнсе.

Хĕрарăм ачана алла тытрĕ.

— Мучукран хăрап,— терĕ ача куçне аллипе сĕркелесе.

— Ма хăратăн мучукран?— терĕ хĕрарăм.— Мучук мар вăл — пичук те. Хăрамалли çук унран. Атя эпир ăна хĕнетпĕр — пире макăртнăшăн.

— Сухви!..

Саня хăй сисмесĕрех ахлатса илчĕ. Хĕрарăм ачине йăтса Саня патнех çывхарчĕ те пĕчĕк ачан сылтăм аллипе Саньăна хулĕнчен çапрĕ.

— Ак! Ак! Ак ăна! Пичук, эсĕ ма макăрмастăн?..

Саня юриех макăрам пек турĕ. Пĕчĕк ача куçне-пуçне чалăртрĕ те савăнса кулса ячĕ.

— Ав вăл макăрать. Халь юрат ăна,— терĕ Сухви.— Ытала мăйĕнчен. Акă эпĕ ыталатăп... Кур...

...Саня мăйне вĕри хул çавăрса илчĕ, пĕчĕк ачан ăвă пек çемçе алли пите сĕртĕнчĕ. Саня ачапа хĕрарăма хыттăн хăй çумне чăмăртарĕ, хĕрелсе кайрĕ.

— Питӳ хура сан,— терĕ вăл вĕрин сывласа, шăппăн.— Сана эпĕ Шупашкара илсе каям-ха... Атăлта пит çума... Пыратăн-и, Миккуль?

— Пит-куçĕпе Ҫуçманах пăхнă,— терĕ Сухви ачан кăвак куçĕ пирки пулас, унтан ачан сăмсине тытса силлерĕ.— Ҫу хамăн...

Саня кулам пек турĕ, хĕрарăмăн пысăк кăвак йĕрпе карталаннă шывлă куçĕсене курсан ирĕксĕрех пуçне ус-

рĕ. Сухви чĕтресе кайрĕ те, сӳлтен кайнă пек, вăйсăрланса пырса авăнсах анчĕ, Саня ҫумне тĕршĕнчĕ.

Вĕсем ҫерем ҫине ларчĕҫ.

Саня вĕри кĕлеткене вăйранах хăй ҫумне чăмăртарĕ.

— Ӑай... Саня... ан... тĕкĕн...

— Сухви!.. Сухви!..

Саня хăй тĕллĕн калаҫнă пек пек-текех ҫав ята асăнчĕ.

— Ӑала, Сухви. Телейлĕ-и эсĕ?

— Телейлĕ, Саня. Телейлĕ! Акă халь ҫак самантра ҫĕр ҫинче никамран та телейлĕрех!.. Урăх манран нимĕн те ан ыйт.

Вĕсем чĕнмесĕр ларчĕҫ. Вĕри тутасем пĕрлешрĕҫ.

— Ҫапах та ку пĕчĕк телей-ҫке-ха, Сухви.

— Ҫук, ҫук, Саня. Эпĕ пĕчĕк телейпех телейлĕ пулма пĕлетĕп. Ӑурнă-ши эсĕ пĕр йĕтĕн тутри туяннăшăнах савăнса пасартан таврăнакан чăваш хĕрарăмне? Йăл кулă вылять-ши сан питӳнте, вăл ҫавăншăн телейлине курсан?

— Сухви! Ӑала эсĕ мана: юратнă-и эсĕ мана виҫĕ ҫул каялла? Мĕншĕн качча тухрăн?

— Ан калаҫ ун ҫинчен, Саня. Ан калаҫ! Йывăр мана ăна аса илме! Мĕне кирлĕ халь ăна асăнма? Юратнă, юратнă! Мĕн кирлĕ тата сана урăх? Ҫапла кирлĕ те. Эп сана качча тухнă пулсан акă халь эсĕ мана юратмастăн. Часах сивĕнеттĕн. Эпĕ те, тен, ҫаплах пулнă пулăттăм. А халĕ эп сана ĕмĕр тăршшĕпех, ҫĕр айне кĕрмичченех, асран ямăп, ăшра тытăп. Эсĕ яла виҫĕ ҫулта пĕрре те пулин килкеле, Саня. Ӑилкеле... Юрать-и?

— Сухви!.. Сухви!..

— Эх, Саня!— Сухви икĕ аллипе те Саньăн ҫӳҫне якатрĕ.— Ҫĕр ҫинче эпĕ, тен, сана курнипе телейсĕр пултăм пулĕ. Астăватăн-и пан улми ҫитернине? Эсĕ ыйтмарăн та ун чух ху мĕнле пан улми ҫинине те. Астăватăн-и, мана ҫураҫма пырсан мĕн тери вĕтеленсе лартăн — евчĕсемпе ҫураҫнăшăн-и, чăваш йĕркипе авланмалла пулнăшăн-и, кам пĕлет сана... Астăватăн-и Сурăм пуххинче юлташусем мĕн калаҫнине? Ҫакăнта сан айăп ҫук-ши вара? Астăватăн-и: пĕве хĕрринче Ӑуҫма пăру шырарĕ? Эсĕ «ҫук» тесе те сăмах чĕнмерĕн. Манăн ун чух ăна шеллесе куҫҫуль юхса тухатчĕ. Ҫакăн хыҫҫăн вара эпĕ сана качча пыма, сан юлташусем хушшинче пурăнма пултарнă-и?

Саня пĕр сăмах та хирĕҫ тавăрса калаймарĕ.

— Манра та айăпĕ пур,— терĕ малалла Сухви.— Эпĕ

ваттисен тыткăнĕнче пулнă пулас. Сана тахçанах килĕштернĕ, санпа калаçасшăн пулнă. Анчах анне ирĕк паман. Эпĕ анне ирĕкĕнчен тухайман. Ялти ватăсен умĕнче куçран ўкесшĕн пулман. Эпĕ ăна малтан хам та сисмен. Халĕ тин туйма пуçларăм. Вĕренессе те мана анне вĕрентмен. Эсĕ те айăплă. Ытла хăвăрт пырса кĕтĕн. Пĕрер çул туслă пулнă пулсан — эпир пĕр-пĕрне ăнланса çитеттĕмĕр тен? Пĕр-пĕрин йăнăшĕсене, çитменлĕхĕсене малтанах, юсама майĕ пур чух, асăрханă пулăттăмăр. Телей çинчен мана Варвари инке юмах ярса панăччĕ. Çавăн пек эпир те телей çунатти çине пусрăмăр. Халĕ ĕнтĕ эпĕ телее урăххинче тупнă: кил-йышра, ача-пăчара... Пĕр-пĕрне мăшăрла килĕштернинче... Хама хам тата эп ун çумĕнче ниме юрăхсăр çын вырăнĕнче туймастăп. Сана качча пынă пулсан эпĕ хама шăпах çапла ниме кирлĕ мар çын вырăнĕнче туяттăм. Ĕмĕр тăршшĕпех сан юлташусем манран артистсен, кĕнекери геройсен ячĕсене пĕлменнишĕн кулнă, мана намăслантарнă пулĕччĕç. Эпĕ халĕ хама майлă телейлĕ, Саня...

Сухви пĕр хушă чĕнмесĕр ларчĕ.

— Ķуçма ыйтмасть,— терĕ вăл малалла.— Мĕншĕн тесен хăй те пĕлмест. Эпир унпа кил-çурт çинчен, выльăх-чĕрлĕх çинчен, ача-пăча ўстересси çинчен калаçатпăр. Ķилĕштерсех пурăнма пулать. Эпир вăрçмастпăр. Вăл ал хума мар — мана пўрнепе те тĕкĕнмен. Авă вăл халь çўрет. Сурăм леш енче. Ун чухнехи пекех, кĕтў кĕтет. Эпĕ те — куратăн — сурăх кĕтĕвĕ кĕтетĕп. Телей тени вăл пурнăçра ăна кам мĕнле ăнланнинчен килет. Ана пĕр виçепе виçме çук... Ķашни çыннăн телейне хăйне уйрăм виçепе виçмелле... Сирĕншĕн пĕтĕм телей çамрăклăхра пулĕ... Эпир урăхларах шутлатпăр...

— Çапах та ма вăрлаттарса ятăн эсĕ хăвна пухăран, Сухви?

— Эпĕ... сана тарăхса!.. Çилленсе!..

Çак хушăра Сурăм шывĕ леш енчен пĕр арçын ал айĕн Саньăпа Сухви еннелле пăхса тăни, унтан умлăнхыçлăн виçĕ хутчен вăрăм пушăпа шартлаттарни илтĕнчĕ.

— Ой!— шартах сикрĕ Сухви.— Упăшка курчĕ... Ав... Мана чĕнет...

Сухви ура çине тăчĕ, пушăпа сулса хурав пачĕ. Пушă вĕçĕнчен йăс пĕрхĕнчĕ. Сухви ачана алла тытрĕ те хуллен Сурăм хĕрринелле утрĕ, часах вăл çырманалла анса çухалчĕ, тепĕр самантран леш енче курăнчĕ.

Часах хĕвел анса ларчĕ. Сухви колхоз фермин сурă-

хĕсене Сурăмăн хăрах енĕпе, Ķуçма ял кĕтĕвне Сурăмăн тепĕр енĕпе хăваласа — кӳршĕ ялĕ еннелле кайрĕç.

Саня сăрт çине хăпарса чылайччен ун хыççăн пăхса тăчĕ.

Çан-çурăма каçхи сивĕпе нӳрĕ сулхăн çапрĕ. Ķурăк çине сивĕ сывлăм ӳкрĕ. Сурăм çинчен шурă тĕтре йăсăрланса хăпарса улăх çине сарăла пуçларĕ. Çав тĕтре пĕтĕмпех Сухви сулса янă пушă вĕçĕнчен пĕрхĕнсе тухса тулнăн туйăнчĕ. Çăра тĕтре майĕпен сарăлса-сарăлса пырса аякра пушă сĕтĕрсе утакан Сухвие хупласа хучĕ.

Саня чĕринче хăватлă кĕвĕ, çак Сурăм тĕтрине сирме чĕнекенскер, амаланса-амалансах пырса янраса кайрĕ... Ķунта Саньăна хăйне ӳпкеленĕ сасăсем те илтĕнчĕç. Шавларĕç, кĕрлерĕç... Ķу кĕвĕ телей тупма, уншăн кĕрешме йыхăрчĕ.